24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941 СЕНТЯБРЬ 4 ҪĔНЕРНИКУН 208 (5923) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

Хĕл валли выльăх апачĕ сителĕклĕ хатĕрлер

Вăрҫă обстановки выльăх апачĕ хатĕрлес ĕҫ сине уйрăмăнах тимлĕн ҫаврăнса пăхма хушать. Выльăх апачĕ сителĕклĕ хатĕрлеме пирĕн пур условисем те пур. Кăҫал выльăх апачĕ вăйлă пулчĕ. Усен-тăрансемпе мĕн май килнĕ таранах усă курма тăрăшмалла. Силос культурисем акса тунисĕр пуҫне, акмасăр ӳсекен куракене, сумкуракене, ҫарансене ҫулса илнĕ хыҫăн ӳсекен каюсене, ҫавăн пекех тата выльăх апачĕ тумалли, технически тата пахча-ҫимĕҫ культурисен каялшĕсене пĕтĕмпех выльăх апачĕ валли пухса хурас пулать.

Ҫĕмĕрле районĕнчи колхозсем улăх тата ҫаран ҫинчен пухса кĕнĕ утăсăр пуҫне, сырмасемпе вăрмансенче ӳсекен куракене те ҫулса пуҫтараççĕ. Ишлей районĕнчи «Ҫĕнĕ хунав» колхозĕнче ҫуллăха валли выльăх апачĕ хатĕрлесе хунă. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем те выльăх апачĕ хатĕрлеслĕпшĕне тимлĕн ӗлӗҫҫĕ. Вĕсем халĕ силос ывăҫҫĕ, ҫулҫăллă турат касса хатĕрлеҫҫĕ. Иртнĕ ҫулхине Калинински, Сĕнтĕр, Первомайски, Хĕрлĕ Чутай, Вăрнар, Канаш, Красноармейски тата Етĕрне районĕсенчи колхозсем ҫулҫуллă апатсем нумай хатĕрлерĕҫ. Çак колхозсем выльăхсене хĕлĕпех ҫулҫăллă апат ҫитернĕ. Кăҫалхи ҫул та нумай колхозсем ҫулҫăллă апата ытлăн-ҫитлĕнех хатĕрлеҫҫĕ. Иĕпрес районĕнчи «Искра» колхоз 105 лав ытла ҫулҫăллă апат хатĕрленĕ. Карăклăри «Броневик» колхоз (Канаш р.) 45 тонна силос хывнă, 30 лав ытларах ҫулҫăллă турат хатĕрленĕ. Выльăх витисене те хĕле кĕме вăхăтра юсанă.

Кăҫал пирĕн республикăри колхозсен 100 пин тонна силос хывса хăвармалла. Çак плана пирĕн тултармалла кăна мар, ăна ирттерсе тултарассишĕн кĕрешмелле. Ку тĕлĕшпе Канаш, Комсомольски тата Красноармейски районĕсенчи колхозсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем ĕнтĕ 7 пин тонна ытла силос хывнă. Елчĕк районĕнчи «Комбайн» колхоз силос хывмалли плана 112 процент тултарнă. Комсомолецсем выльăх апачĕ хатĕрлес ĕҫре колхозсене пысăк пулăшу парса пыраççĕ.

Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕҫре СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ колхозсенче выльăх-чĕрлĕх апатне ӳстермелли майсем ҫинчен йышăннă постановлени тĕп вырăн йышăнса тăрать. Çак постановлени тăрăх, силос хывмалли плана ирттерсе тултарнăшăн хушса памалли тӳлеве, колхозниксем кăмăллăнă тăрăх, натурăпа — силоспа тӳлемелле е ун вырăнне, колхоз правленийĕ палăртса ҫирĕплетекен йĕркепе, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем е укҫа памалла. Çакна пур колхозсенче те тĕрĕс пурнăҫа кĕртсе пымалла.

Колхозсенче силос хывас ĕҫе кайри плана хăварма юрамасть, ăна уй ĕҫĕсемпе пĕр вăхăтрах туса пымалла. Хăшпĕр колхозсем халь ҫĕрулми аврине шанаççĕ. Капла шутлани тĕрĕс пулмасть. Ҫĕрулми авринпе нумай силос тума çук, ытти курăксемпе ытларах усă курма тăрăшмалла. Силоса хывмалли курăксене вăхăтра пуҫтарса илсен кăна сĕтекле апат туса илме пулхать. Çакна колхоз руководителĕсен пĕр самантлăха та манма юрамасть. Вĕсен ҫамрăкĕсене сырмасенче тата вăрмансенче ӳсекен курăксене силос валли пуҫтарма мобилизацилемелле. Силос хывнă вăхăтра пур правилăсене тутăнăнса тăмалла. Силос массине чи малтанах вĕтетни кирлĕ, унтан хытă тантаса купаламалла. Силос шăтăкĕ тавра шыв юхмалли канавсем тумалла.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли сĕтекле апатсем хатĕрлес тĕлĕшпе колхозсенчи комсомолецсемпе союзра тăман ҫамрăксем хастарлăн ĕҫлеҫҫĕ. Çĕмĕрле районĕнчи «Новая жизнь» колхоз 144 тонна, «Лесной огонек» колхоз 200 тонна силос хывнă, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз планпа пăхнинчен ирттерсе 20 тонна хыврĕ. Çак колхозсенче комсомолецсемпе союзра тăман ҫамрăксем тата шкул ачисем выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмăнах активлăн ĕҫлеҫҫĕ. Ҫамрăксем тăрăшниле ҫулҫăллă апатсем те чылай хатĕрленĕ.

Комсомолăн Кувакино тата ытти организацийĕсем пуҫарнипе августăн 27-мĕшпе сентябрĕн 7-мĕш хушшинче республикăри пур районсенче те силос хывмалли вунăкунлăх ирттереҫҫĕ. Çак вунăкунлăхра та колхозри ҫамрăксем хăйсен пултарулăхĕсене ĕҫре кăтартса параççĕ. Ишлей районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем вунăкунлăх пуҫланиччен ес 86 тонна силос хывнă. Вунăкунлăх пуҫланнă хыҫăн 4 кун хушшинче татах 34 тонна силос хыврĕҫ. Çĕньялти комсомолецсем те виҫĕ кун хушшинче 12 тонна силос хывнă. Унсăр пуҫне 15 шăтăк хатĕрленĕ. Комсомолецсем силос хывмалли плана тултарас тата ытлашшипех тултарас лозунгпа ĕҫлеҫҫĕ.

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче Совет Союзĕнчи ҫамрăксем Пĕтĕм Тĕнчери ҫамрăксен кунне уявласа ирттереҫҫĕ. ВЛКСМ Центральный Комитечĕ Пĕтĕм Тĕнчери ҫамрăксен кунне сентябрĕн 7-мĕшне куҫарса, çак кун оборона фончĕ валли комсомолецсемпе союзра тăман ҫамрăксен воскресникне туса ирттермене сĕнчĕ. Çак кун колхозсенчи комсомолецсемпе ҫамрăксен тата шкул ачисен пурин те воскресникне тухса, колхозсене тырпул пухса кĕртме, выльăх апачĕ хатĕрлесе хума пулăшас пулать. Паллах, комсомол райкомĕсемпе пуҫламĕш организацийĕсен малтанах воскресникре мĕнле ĕҫсем тумаллине палăртса хунă кирлĕ.

Паллах, силос хывас ĕҫе ҫамрăксем кăна мар, ытти колхозниксен те активлăн хутшăнса ĕҫлеме тăрăшмалла. Мĕншĕн тесен выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат хатĕрлесси пĕтĕм колхозниксен задачи пулса тăрать.

Ҫавăн пекех, колхозсем умне тепĕр ҫивĕч ыйту тухса тăрать. Вăл хатĕрлесе хунă апат-ҫимĕҫсене сыхласа усрасси тата вĕсемпе перекетлĕн усă курасси пулать. Выльăх апатне шутсăр, типтерсĕр тытмалли вăл — государство умĕнче айăпа кĕнине танах шутланать. Кашни килограмм апата перекетлеме тăрăшни кирлĕ. Ҫавăнпа та выльăх апатне сыхласа усрас ĕҫре ҫирĕп йĕрке пулмалла. Уйăҫ бригадисем тата звеносем туса илнĕ мĕнпур апатсене уйхиртен пуҫтарса кĕнĕ хыҫăнах колхоз правленийĕсен йышăнмалла. Вĕсене лайăх тиркешлесе тунă купасенче, капансенче е сарайсенче пăхса усрас пулать. Тымар-ҫимĕҫсене ятарласа тунă хранилищесене хумалла. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ «Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫ валли выльăх апатне ӳстермелли мерăсем ҫинчен» йышăннă постановлени тăрăх, апатсене пĕтĕмпех виҫсе акт тăрăх йышăнмалла, акт ҫинче мĕн чухлĕ туртнине, апатсен пахалăхне, капана хывнин пахалăхне кăтартса памалла. Колхоз правленийĕсен октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр выльăхсене витесенче усрамалли пĕтĕм тапхăр валли выльăх апатне уйăхсерен расходламалли план туса хатĕрлемелле. Çак плана тунă чухне выльăхсем валли вĕсене кĕтӳре ҫӳремелле пуличчен мĕнчул апат-ҫимĕҫ кирлĕ пулассине тĕплĕн шута илес пулать, плана пурнăҫа кĕртсе пынине кашни уйăхра тĕрĕслесе тăмалла.

Выльăх апатне сителĕклĕ хатĕрлени тата ăна перекетлесе пăхса усрани — обществăллă выльăх-чĕрлĕхсене тутă хĕлкаҫарма тата Хĕрлĕ Ҫар валли кирлĕ таранах выльăх апачĕ, парса тăма пулăшать.

Совет халăхне саламлани

Дурбанран (Кăнтăр Африка Союзĕ) Сталин юлташ ячĕпе ҫакăн пек телеграмма килнĕ:

«Фашизма хирĕҫ пыракан кĕрешӳре Дурбан хулинче пурăнакансем совет халăхне пур енĕпе те пулăшса пыма сăмах параççĕ.

Совет Союзĕн тусĕсем, Дурбан хули, Давенпортирш, 20».

* * *

Торонторан (Канада) СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Калинин юлташ ячĕпе ҫакăн пек телеграмма килнĕ:

«Эпир, Канадăра пурăнакан чехсемпе словаксем 500 ҫын, Торонто хулинчи митинг участникĕсем, нацистсем тапăнса кĕнине хирĕҫ кĕрешекен геройла Хĕрлĕ Ҫара саламлатпăр. Сирĕн пĕрлешсе пĕтĕҫнĕ халăхсем цивилизаци тăшманне ҫапса аркатассине эпир шанса тăратпăр. Хăвăртрах ҫĕнтермелле пултăр тесе, эпир Сире пур енчен те пулăшма пулатпăр, фашизма ҫĕнтерни вăл—Сирĕн ҫĕнтерӳ ҫеҫ мар, тата пуссмăра кĕртсе ӳкернĕ Чехословаки халăхĕн ҫĕнтерĕвĕ те пулса тăшшне эпир ăнланатпăр.

Канадăри чехсемпе словаксен фашизма хирĕҫле комитечĕ».

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Сентябрĕн 2-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ)

Сентябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕҫ вăйлă ҫапăҫусем туса пынă. Халăр ҫапăҫусем хыҫҫăн пирĕн войскăсем Таллин хулинчен тухса кайнă.

Тĕплĕн шута илнĕ тăрăх, августăн 30-мĕшĕнче нимĕҫсенне малтан пĕлтернĕ пек 31 самолет мар, 75 самолет пĕтерсе тăкнă.

Августăн 31-мĕшĕнче сывлăшри ҫапăҫусенче нимĕҫсен 23 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 22 самолет пĕтнĕ.

* * *

Фронтăн ҫурҫĕр-хĕвеланăҫ енче нимĕҫ бомбардировщикĕсен пысăк группи пирĕн Н. пункт ҫывăхĕнче укрепленисем тунă участок ҫине пырса тапăнма хăтланнă. Укреплени тунă участокран 30 километрта тăшман бомбардировщикĕсене совет истребителĕсем хирĕҫ пулнă. Фашистсен самолечĕсем ҫапăҫăва кĕмесĕр пăрăнса кайнă, пĕчĕк группăсене уйăрăлса, хăйсем палăртса хунă ҫар объектне тĕрлĕ енчен пырса атакăлама хăтланнă. Зенитнăй батарейăсенчен пекине пула, нимĕҫсем хăйсен бомбисене пирĕн укрепленисенчен аякра нимĕн йĕркесĕр пăраха-пăраха хăварнă, тата 4 «Юнкерс» сухатса, каялла кайнă. Вĕсем хыҫҫăн капитан Сысоев командир пулса ертсе пыракан хăвăрт каякан бомбардировщиксем ҫĕлте вĕҫсе хăваласа пынă. Пĕр сехетрен тăшман самолечĕсен пĕр группи хăйсен аэродромĕ ҫине ларма кайнă. Совет самолечĕсем аялалла хăвăрт анса, аэродром ҫине фугаслă тата осколочнăй бомбăсем пăрахнă. Килсе тапăнассине кĕтмен фашистсем оборона организацилеме те ĕлкĕреймен. Сысоев капитанăн бомбардировщикĕсем пĕрин хыҫĕнчен тепри аэродром ҫинче пикировкă туса, противникăн самолечĕсене пĕтеем пĕтере тăкнă. Нимĕҫсен аэродром ҫинче тăракан темиҫе истребителĕ сывлăша хăпарма хăтланнă, анчах совет самолечĕсем вĕсене пĕрле ӳкернĕ. Фашистсен 15 ытла бомбардировщикне тата 4 истребительне пĕтерсе тăкса, совет самолечĕсем, икĕ самолетсăр пуҫне, пурте хăйсен базине тавăрăлнă.

* * *

Отечественнăй аслă вăрҫăн кашни кунĕ пиншер ҫĕнĕ геройсем ҫуратать, вĕсем фашистла йыткĕтĕвĕсене хăюллăн тата хăйсене шеллемесĕр ҫĕмĕрсе пыраççĕ. Çак кунсенче Н-ски ветеринăй дивизион боецĕсем тӳрĕ наводкăпа персе тăшманăн икĕ танкне ҫĕмĕрсе тăкнă тата виҫҫĕмĕш танкне каялла тартнă. Çак ҫапăҫура батарея политрукĕ Горель юлташ калама çук хăюллă пулнине кăтартнă. Пулăсемпе персе тăнине пăхмасăрах, вăл тăшманăн ҫĕмĕрĕлнĕ танкне кĕнĕ те, танкри тупăпаран тăшман пехоти ҫине персе тăнă. Хура тинĕс флочĕн сержантĕ Нечипоренко тăшман тылне кĕрсе кайсан, унта противотанковăй батарейăна курнă. Хăюллă краснофлотец батарея ҫине гранатăсем ывăтнă. Батарейăн икĕ орудине пĕтерсе тăкнă. Сержант хăйĕн чаҫне икĕ лаша тата боеприпассемпе пĕрле противотанковăй оруди илсе пынă.

Кĕҫĕн командир Шалмов икĕ красноармеецпа пĕрле противник оборонин малти хĕрринче разведкăра пулнă. Виҫĕ хăюллă разведчик ҫĕрле тăшман траншейисем патне шăпăн шăвăнса пынă. Разведчиксем ҫасах нимĕҫсен тăватă салтакне курнă. Нимĕҫсене 10—15 метра ҫити ҫывăха килме май парса, пирĕн боецсем вĕсене гранатăсемпе персе пĕтерсе тăкнă. Фашистсем тĕттĕмре пулеметсемпе минометсенчен нимĕн йĕркесĕр пеме тытăннă. Шалмов юлташ, тăшман точкисем ăста вырнаҫса тăнине палăртнă хыҫҫăн, противник персе тăнине пăхмасăрах, маллалла упаленсе кайнă та, гранатăсем ывăтса виҫĕ пулеметнăй расчета пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн ҫурҫĕр-хĕвеланăҫ енче тăшман тылĕнче ҫапăҫакан совет партизанĕсем вĕҫĕмсĕр хăюллăх, чăтăмлăх тата паттăрлăх кăтартаççĕ. Д. районĕнче вăрман ҫулĕпе нимĕҫсен 80 салтакĕнчен тăракан отряд пынă. Ултă хăюллă партизан засада туса фашистсем ҫине пенĕ. Малтанхи залпсем хыҫҫăнах фашистсем сапаланса кайнă, хăйсем пынă вырăнта темиҫе салтак вилсе тата аманса юлнă. Г. ялĕнче партизансем тăшман мотоколонни ҫине тапăннă, ручной гранатăсем ывăтса 10 грузовой автомашинăна тата 40 ытла фашиста пĕтерсе тăкнă. П. ялĕн районĕнче урапа ҫулĕпе нимĕҫсен мотоколонни иртсе каяссине пĕлсен, партизансем виҫĕ кĕпере ҫĕмĕрсе пĕтернĕ, ҫул ҫине чулсемпе йывăҫсем пăрахса тултарнă, хăйсем засадăна выртнă. Пулса иртнĕ ҫапăҫура нимĕҫсем 36 салтак, 17 мотоцикл тата патронсем тиенĕ 3 грузовой машина ҫухатнă. Август уйăхĕн вĕҫĕнче нимĕҫсен 3-мĕш мотодивизи ваҫĕсем хĕвелтухăҫнелле куҫса пынă. П. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ тăшман разведкине тата малти охраненине хăйĕн умĕнчен ирттерсе янă та, колонна ҫине кĕтмен ҫĕртен пенĕ. Нимĕҫсене ҫĕр ҫинна яхăн вĕлернĕ. Нумаях пулмасть Х. ялĕ патне фашистсен самолечĕ анса ларнă, ăна пирĕн зенитнăй артиллери персе ҫĕмĕрнĕ пулнă. Партизансем офицер ертсе пыракан тăватă летчика, хаклă документсемпе карттăсене тытса илнĕ. Ш. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ 14 кун хушшинче кăна нимĕҫ салтакĕсемпе офицерĕсене 200 ҫын ытла вĕлернĕ, вĕсем хушшинче 60 мотоциклист тата 90 велосипедист пулнă, тата партизансем 18 грузовой автомашинăна, виҫĕ радиостанцине тата ытти нумай вооруженипе снаряженине пĕтерсе тăкнă.

Партизансен кĕрешĕвĕ ӳссе пынине пула противник шикленсе ӳкнине Германин ҫурҫĕр енчи ҫар группин штабĕ калăрнă пĕр распоряжени уҫҫăн кăтартса параль, унта ҫапла каланă: «Партизансен кĕрешĕвĕ ӳссе кайни уйрăм салтаксене тата пĕчĕк группăсене ялла вырăнсенчен иртсе ҫӳреме май памасть (тĕрессипе каласан — «чарса лартать»). Салтаксен яланах халăх ҫĕрекен ҫулсемпе, сăмахран, обозсем турттаракан ҫулсемпе усă курмалла. Уйрăм салтаксемпе пĕчĕк отрядсен халăх ҫĕрекен ҫулсен айккинче тăракан ялсене кайса ҫӳремелле пулсан, вĕсем кайма тăнă ял хăрушă мар иккенне сывăхри ҫар органĕнпĕлсе ҫитнĕ хыҫҫăн ҫеҫ унта кайма пултараççĕ».

* * *

Немĕҫсемпе Итали оккупанчĕсем халăр террор туса пырсан та, серб халăхĕн партизанла движенине пуҫтарса лартма пултараймаççĕ. Югославин партизансем йышăнса илнĕ хулинчен Белграда нумаях та пулмасть пĕр серб пынă, ăна партизансен влаҫ пропуск парса янă. Çав документ ҫине «Оккупацилемен Югославия» тесе заголовок ҫырнă. Хĕвеланăҫ Боснире партизансем икĕ хулана — Ключ тата Мркони град хулисене йышăнса илнĕ Югослави патриочĕсен ăнăҫлăн пулса пыракан кĕрешĕвĕ пирки тарăхса кайнă фашистсем Югославине оккупантсен пусмăрĕнчен хăтарассишĕн пыракан халăх движенине юн ăшĕнче пуҫтарма хăтланаççĕ. Фашистсем мирлĕ халăхран тискер-кайăкла мăшкăлланаççĕ. Немĕҫсен офицерĕсемпе салтакĕсем пуҫтасене ҫĕмĕрсе кĕреççĕ, серб хĕрарăмĕсене тата ҫитĕнсе ҫитмен хĕрсене тытса илсе, вĕсене полксенчи салтаксем валли уҫнă публичнăй ҫуртсене ăсатаççĕ. Хĕрарăмсен хутне кĕме хăтланакан кирек мĕнле серба та фашистсем вĕлереççĕ. Анчах та оккупантсем серб халăхне террорпа хăратса ӳкерме пултараймаççĕ. Оккупациленĕ Югославире партизанла движени сарăлнăҫемĕн сарăлсах пырать.

* * *

Чугунҫул транспортĕнче патриотăкăсен движенийĕ ӳссе пырать. Нумай станцисемпе депосенче хĕрарăмсем валли производствăллă кружоксем организацилеленĕ. Караганда чугунҫулĕ ҫинче килхуҫи хĕрарăмĕсем-активисткăсем токарь ĕҫне тата телеграфа вĕренеççĕ. Агадыр станцинчи килхуҫи хĕрарăмĕсем 100 ҫын ытла производствăна ĕҫлеме кайнă. Ворошилов ячĕпе тăракан ҫул ҫинчи Каменеломня деповĕнчи машинистсен арăмĕсем Спельниковăпа Беспалова юлташсем машинистсен помощникĕсем пулса ĕҫлеме пуҫланă. Депо начальник заместителĕн арăмĕ Лалышева юлташ, главнăй бухгалтер арăмĕ Федорова юлташ, слесарь арăмĕ Воронина юлташ слесарь-автоматчик профессине вĕренеççĕ. Ленински чугунҫулăн Моршанск отделенинче килхуҫи хĕрарăмĕсем 50 ҫын ытла стрелочниксем тата кондукторсем пулса ĕҫлеççĕ ĕнтĕ. Мичуринскри тата Кочетовскри узелсенче килхуҫи хĕрарăмĕсем 70 ҫын машинистсен помощникĕсем тата вагонсен осмотрщикĕсем пулма вĕренеççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Сентябрĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Сентябрĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕҫ ҫапăҫусем туса пынă.

Пирĕн авиаци противникăн мотомехчаҫĕсене, пехотине тата артиллерине пыра-пыра ҫапнă, унăн аэродромĕсенчи авиацине атакăланă.

* * *

Орденоносец Жмаченко командир пулса ертсе пыракан часть, питех те кирлĕ вырăна хӳтлесе тăраканскер, юлашки кунсенче нимĕҫсен 135-мĕш пехотнăй полкăн темиҫе хайăр атакине сире-сире янă. Ҫĕрле часть контратака тума тытăннă. Тĕттĕм пулнине усă курса, красноармеецсем тăшман окопĕсем патне сывăхах пырса ҫитнĕ. Меркулов юлташăн подразделенийĕ нимĕҫсен малти салтакĕсене пĕтерсе тăкса, противник вырнаҫса тăнă вырăна кĕрсе кайнă та, тăшмана хĕссе пыма тытăннă. Чакса пыракан нимĕҫсене старший лейтенант Ожогинăн засадăра пулнă подразделенийĕ кĕтсе илнĕ. Фашистсене ҫавăрса илсе хĕсме тытăннă. Пулеметсемпе пăмалсенчен персе тата штык вĕҫĕн атакăласа, Жмаченко юлташ ваҫĕн боецĕсем тăшмана ҫĕмĕрсе тăкнă. Нимĕҫсен икĕ миномет, противотанковăй туппине, вунпар пулеметĕсемпе автоматĕсене, минăсемпе патронсен пысăк запасне ярса илнĕ. Нимĕҫсен 135-мĕш пехотнăй полкĕн юлашкийĕсене сапаласа янă.

* * *

Красноармеец-шоферсем противник персе тăнă вăхăтрах фронтри малти позицисем патне боеприпассем тата ытти япаласем илсе пынă чухне патăрлăх кăтартса ĕҫлеççĕ. Нимĕҫсен миномечĕ лекнипе шофер Дмитриченко шоферăн атомашинине вут хыпса илнĕ. Минăсем ӳксе ҫурăлнă вăхăтрах хăюллă водитель пушара сӳнтерсе лартнă, машинăна хӳтлĕхлĕ вырăна илсе кайнă та, снарядсене орудисем патне илсе пыма тытăннă. Дмитриченко юлташăн фашистсен пусмăрĕ айĕнче», «Хальхи вăхăтри тылпа фронт» тата ытти ҫавăн пек темăсем тăрăх лекцисемпе калаҫусем ирттернĕ.

Сентябрь уйăхĕнче «Вырăс халăхĕ хăйĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешни», «Халăхсен фашистла варварсене хирĕҫ тунă пĕрлĕхлĕ фрончĕ», «Отечественнăй вăрҫă вăхăтĕнчи революцилле сыхăлăх ҫинчен», «Совет государстви военнослужащисен семьинесмшĕн тăрăшни» темăсемпе лекцисем пулса иртнĕ. Колхозсенче фронтпа тыл хушшинчи сыхăну ҫинчен калаҫусем ирттерме палăртнă.

Парткабинет работникĕсем хулари предприятисене тата колхозсене тухса ҫӳресе, политикăлла-массăллă ĕҫе йĕркелеме пулăшаççĕ.

Ытларах тата лайăх пахалăхлă продукци парассишĕн

Шупашкарти кирпĕч заводĕнчи рабочисемпе работницăсем ĕҫ тухăҫлăхне кулленех ӳстерсе пыраççĕ. Вĕсем, отечественнăй вăрҫă вăхăтĕнче тылра та фронтри пек ĕҫлемелле, текен лозунга яланах асра тытса, мĕн пур вăя хурса ĕҫлеççĕ. Чылай рабочисем ҫара кайнă пулин те, заводра ĕҫ чарăнса тăмасть. Фронта кайнисем вырăнне хĕрарăмсем ĕҫе тăраççĕ. Вĕсем производствăра лайăх квалификаци илессишĕн, техникăна вĕренессишĕн тăрăшаççĕ. Хĕрарăмсенчен нумайĕшĕ ĕҫ нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Евдокия Тораева, Александра Кузьмина юлташсем уйăхри плана 130,5—139 процент таран тултараççĕ. Ҫавнашкалах Алексей Кошкадаров, Иван Болдарев тата ытти юлташсем те ĕҫ нормисене 138—161 процент таран тултарса ĕҫлеççĕ. Кирпĕч заводĕнче ĕҫлекенсен коллективĕ пĕр ҫын пек пулса, ҫĕршывăн ытларах тата лайăх пахалăхлă продукци парассишĕн тăрăшса ĕҫлет.

М. Ч-ва.

637 тонна силос хывнă

ИШЛЕЙ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат сителĕклĕ хатĕрлес тĕлĕшпе комсомолецсемпе союзра тăман ҫамрăксем активлăн ĕҫлеççĕ. Силос хывмалли вунăкунлăх пуҫланнăранпа комсомолецсемпе союзра тăман ҫамрăксен вăйĕпе 637 тонна силос хывса хăварнă. Хозанкай колхозĕнчи комсомолецсем 6 тонна, Çĕньял колхозĕнчи ҫамрăксем пĕр кун хушшинче 9 тонна, Пархăкасси колхозĕнчи комсомолецсем 4 тонна, «Ударник» колхозри комсомолецсем 20 тонна силос хывнă. Комсомолка А. Ефимова налог агенчĕ пулса ĕҫленĕ хушăрах силос хывас ĕҫре те активлăн хутшăнса ĕҫлет. Паянхи куна районĕпе 1.587 тонна силос хывнă.

Сентябрĕн 7-мĕш кунĕнче районри комсомолецсемпе союзра тăман ҫамрăксем тата шкул ачисем пурте воскресникре тухса силос хывма хатĕрленеççĕ.

А. МИХАЙЛОВ.

Паркабинетăн вăрҫă вăхăтĕнчи ĕҫĕсем

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕ хăйĕн ĕҫне вăрҫă вăхăтне тивĕҫлĕ йĕркепе ҫĕнтесе пырать. Иртнĕ уйăхра «Европăри халăхсем фашизм пусмăрĕ айĕнче», «Хальхи вăхăтри тылпа фронт» тата ытти ҫавăн пек темăсем тăрăх лекцисемпе калаҫусем ирттернĕ.

Сентябрь уйăхĕнче «Вырăс халăхĕ хăйĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешни», «Халăхсен фашистла варварсене хирĕҫ тунă пĕрлĕхлĕ фрончĕ», «Отечественнăй вăрҫă вăхăтĕнчи революцилле сыхăлăх ҫинчен», «Совет государстви военнослужащисен семьинесмшĕн тăрăшни» темăсемпе лекцисем пулса иртнĕ. Колхозсенче фронтпа тыл хушшинчи сыхăну ҫинчен калаҫусем ирттерме палăртнă.

Парткабинет работникĕсем хулари предприятисене тата колхозсене тухса ҫӳресе, политикăлла-массăллă ĕҫе йĕркелеме пулăшаççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçăн фрончĕсенче

☆ ★ ☆

Боевой эпизодсем

Тимĕр тăвăл

Пирĕн подразделени тăшмана йĕрлесе пынă. Çул çинче ăна противник артиллеринен тата минометсенчен хытă пенĕ. Стрелоксене пулăшма танксем килсе çитнĕ. Анчах та противник батарейи эпир каймалли вырăна персе тăнă, задачăна пурнăçа кĕртме чăрмантарнă.

Çак батарейăна пĕтерсе тăкма Совет Союзĕн Геройĕ Кирьянов хăй çине илнĕ. Вăл тинкерсе сăнанă хыççăн çак батарея тăшман позицин тылĕнче тăнине пĕлнĕ. Çапла вара, ăна пĕтерме белофинсен тылне çĕмĕрсе кĕмелле пулнă.

Кирьянов танкĕ тăшман оборони урлă хăвăрт каçса кайнă. Тăвăллăн персе тăнă пулсан та, машина белофинсен тылне кĕрсе кайнă. Кирьянов шюцхоровецсен бандичĕсене тупăран та пулеметран та персе пырса, тăшман батарейи патне çитнĕ. Вăл танкна перĕнсе пĕр орудине ӳпĕнтерсе янă, теприне гусеницăсен айне лектерсе çĕмĕрсе тăкнă.

Çĕр çинчи совет броненосецĕ белофинсен тылĕ çинче тимĕр тăвăл пек иртнĕ, хăйĕн çулĕ çинчи мĕн тĕл пулнă, пурне те таптаса, çĕмĕрсе, персе пĕтернĕ. Совет Союзĕн Геройĕ Кирьянов хăйĕн экипажĕпе пĕрле боевой задачăна пурнăçа кĕртсе мухтавлă ĕç тунă.

Вырăс тавçăруллăхĕ

Кĕçĕн сержант Безбородов хăйĕн подразделенийĕ çĕнĕ позицине куçнине хӳтлесе персе тăнă. Тăшман минин ванчăкĕ унăн винтовкине çĕмĕрнĕ. Вара вăл, юлашки гранатине аллипе чăмăртаса тытса, хамăрăннисем патнелле пынă.

Малта типĕ çатрака шăтăртатнă. Безбородов туратлă чăрăш хыçне тăнă, кайран тарăн курăк ăшне пытаннă. Темиçе пуля унăн ури таврашĕнчи тăпра çине пырса тăрăннă. Часах кĕçĕн сержант ун патне тăватă белофинн пытанса пынине асăрхаса илнĕ. Вĕсем хĕпăшалсăр боеца чĕрĕлле тытасшăн пулнă.

— Русь, сдавать! — тесе хăшкăрнă бандитсенчен пĕри.

Безбородов гранатăн аврине хытă чăмăртаса тытнă. Сулса, ывăтса янă... Хăлхана хупласа илекен взрыв янраса кайнă. Мăкăрланса çăкланнă тĕтĕмпе тусан Безбородова тăшмансен куçĕсенчен пытарнă. Вăл, çак вăхăтра усă курса, айккинелле сиксе ӳкнĕ те пытаннă. Унтан инçе мар унăн гранати лексе ӳкнĕ икĕ бандит выртнă, вĕсене тăпра хупланă. Чĕрĕ юлнисем Безбородова шыранă, анчах тупайман-ха.

— Эх, тепĕр граната пулсанччĕ! — тесе шухăшланă Безбородов, вилнĕ белофинсен енне пăхнă. «Унта пур — шухăшлана вăл, — анчах мĕнле илмелле?» Унăн аллине кĕске йывăç тăтăкĕ лекнĕ, вара боецăн пуçĕнче хăюллă шухăш çуралса тухнă.

Безбородов тăнă та хытă кăшкăрнă:

— Ах сире, çĕлен-калтасем! — тенĕ те, йывăç тăтăкне ывăтнă.

Бандитсем тарса айккине пăрăннă. Безбородов унччен хăйĕн гранати çурăлнă вырăна сиксе ӳкнĕ. Пĕр вилнĕ тăшман умĕнче çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ «Суоми» автомат выртнă. Тепĕр белофинăн винтовки сиенленмен.

— Халĕ ĕнтĕ илеймĕр! — тенĕ хăй йăшăнче кĕçĕн сержант, затвора хăнăхса çитнĕ аллипе туртнă.

Ытти бандитсем хăюллă боецпа урăх сыхланма хăраса, каялла тарнă. Безбородов хăйĕн подразделенине чиперех пырса çитнĕ.

Çунакан блиндажра

Противник, артиллеринен тата минометсенчен персе хăйĕн çулне уçса пырса, С. юханшывĕ урлă каçса каяссăн пулнă. Юханшывăн пирĕн енчи сыранĕ çинче блиндаж пулнă. Ун çине вут тивретекен темиçе бомба ӳкнĕ. Блиндаж çунма пуçланă.

Унта пулеметчик Эльви пулнă. Хăюллă боец, вилĕмрен хăрамасăр, хăйĕн постĕнчен кайман, нимĕç фашисчĕсене тĕл персе тивретнĕ.

Противника сирпĕтсе ярсан тин Эльви укрепленинчен тухнă. Тăшмана аркатнă хыççăн вăл блиндажа сӳтерме пуçланă.

Красноармеец Сапожков

Çапăçу хĕрсе пынă чухне красноармеец Сапожков унăн ротинчи политрук Кривенко, тăшман пульли лексен, ӳкнине курнă. Сапожков çав самантрах окопран тухнă, упаленсе политрук патне пынă. Ывăр аманнă политрука вăл йывăç тĕмĕ айĕнче тупнă. Вăл аманнă политрука çĕкленĕ те тыла кайма тытăннă. Темиçе метр хушши упаленсе кайсан, пушă тăракан пулемета курнă. Боец ку пулемет мĕнле пулсан та тăшман аллине ан лектĕр тесе шухăшланă. Вăл мĕнпур вăйне пухса хăйĕн политрукне çĕклесе пынă тата хăйĕн хыççăн пулемета сĕтĕрнĕ.

Политрука санитарсем патне леçсен, пулемета командира парсан, Сапожков çĕнĕрен çапăçăва кĕнĕ.

Фронтри çемье

Топольскисен пĕтĕм çемьи — пичĕшпе шăлнĕ Анатолипе Виталий, вĕсемпе пĕр тăван Таисия, вĕсен амăшĕ 53 çулхи Марфа Федотовна тăван çĕршыва сыхлама тăнă.

Виталий Топольский — летчик-истребитель. Тăшмана хирĕç малтанхи çапăçурах вăл пысăк хăюллăх кăтартнă. Çапăçура енсен вăйĕсем пĕр пек пулман. Пирĕн виçĕ истребитель çине ултă «Мессершмитт» тапăннă. Вĕсем звено командирĕн машинине персе ӳкерме хăтланнă. Лейтенант Топольский малалла хăвăрт кайнă, пулеметран персе тăшман моторне лектернĕ. Çăхан штопора лексе, ӳксе саланнă. Фашистсем тарнă. Кайранхи кунсенче Виталий пĕрре кăна мар çĕнтерсе хăйĕн аэродромне тавăрăннă.

Летчиксем, боевой вĕçевсенчен аэродрома тавăрăнсан, канма кайнă чух боеприпассен складчĕ умĕнче чăрăначăрăна тăраççĕ. Унăн ӳсса тунă алăкĕсем умĕнче пĕр карчăк ларать. Унăн типпĕм аллисем хăвăрт та шанчăклăн ĕçлеççĕ. Вăл пулемет лентисене тултарать.

— Манăн Виталий вĕçсе килчĕ-и? — ыйтать вăл.

— Килчĕ, аннемĕр. Тата теприне персе ӳкерчĕ.

Карчăк ырласа пуçне суллать.

Виталипе пĕр тăван Анатолий те летчик, вăл та фронтра. Таисия дружинница, малти позицисенче ĕçлет.

Топольскисен пĕтĕм çемьи — совет патриочĕсен çемьи — отечественнăй вăрçă фрончĕсенче кĕрешет.

ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ. Укерчĕк çинче: тральщик боевой операцине тухса каять.
И. Драныш фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

Çаратакансене тивĕçлипе отпор панă

Партизансен отрячĕ фашистсен тылĕнчен тавăрăннă. Вăрман сухмакĕсемпе пырса, вал шурлăхсем урлă каçнă, чăтлăхсем витĕр тухнă, çул çинче нимĕç вăрă-хурахĕсем çаратнă ялсене тата колхозсене курнă.

Партизансем тăшманăн чĕрĕ вăйне пĕтерсе, сыхăнуне татса тата фашистсен тылĕсемпе обозĕсене пере-пере пынă.

С. юханшывĕн хĕрринче отряд комиссарĕ Кирленко икĕ ачана курнă, вĕсем тĕмсем айне пытаннă.

— Эсир ăçтан?

— Ав леш ялтан.

— Унта нимĕçсем пур-и?

— Тăватă офицер машинăпа килчĕç. Чăхсене тытаççĕ, çамартасем пухаççĕ, кĕлетсене çаратаççĕ.

Партизансем ял патне пынă та çул хĕррине выртнă. Чи малтан персенех, икĕ офицера вĕлернĕ. Шофер тарма хăтланнă, пĕтĕм газне ярса хăвăрт кайма тăнă, анчах çул çинчи кĕпере партизансем çĕмĕрнĕ пулнă.

Машина чăрăннă. Унтан икĕ офицер сиксе тухнă, пеме тытăннă. Нимĕç офицерĕ граната ывăтнă, анчах партизан пульли лексе ăна сасартăк ӳкернĕ. Шофер та вилĕмрен тарса хăтăлайман.

Нимĕçсем хăйсен машини çине çаратса илнĕ пурлăха — чăхсем, хурсем, çамартасем тата тăпăрч тултарнă. Партизансем машинăна çунтарнă, вĕлернĕ офицерсен хĕпăшалĕсене тата сумкисене илнĕ.

Сумкăсенче тупнă çырусем нимĕçсем партизансенчен калама çук хытă хăрани çинчен пĕлтереççĕ. Темле Мицель ятлă хĕрарăм майор Фриц Р. патне çырнă çырăвĕнче:

— Сирĕн патра çаплах партизансем нумай-и? Тен, сахалланчĕç пулĕ? — тесе ыйтать.

П. МАЙСКИЙ.
«Известия» хаçатăн спецкорĕ.

Сыхăлăх

Чикĕ хĕрринчи Н. чугунçул çинче путевой обходчик Зигуля юлташ хăйĕн километрне пăхса çӳренĕ чух диверсантсем чугунçул полотни айне хунă минăсене курнă. Сыхăлăхлă обходчик çулăн хăрушă участокне часах çавăрса илнĕ, сывхарса килекен поезда чарма мерăсем ыйтăннă. Машинист помощникĕпе Поздняков юлташпа пĕрле вăл минăсене сиенсĕрлетнĕ, вара поезд çак участокран лайăх иртсе малалла кайнă.

Фронт сывăхĕнчи çулсем çинчи работниксем пирĕн узелсене кĕме хăтланакан диверсантсене тытаççĕ. Б. ятлă станци çине тăшман авиацийĕ пырса тапăннă вăхăтра вагонсем пăхакан старший осмотрщик Дейкин юлташ такам çутăпа сигналсем панине асăрханă. Ана пирĕн территорине кĕрсе пытаннă тăшман тунă. Хăюллă железнодорожник фашистла шпиона çавăнтах тытнă.

Нумай пулмасть, главнăй кондуктор Стефанкова юлташ пĕр станцинче пĕр сынна асăрханă. Вăл вокзала ларнă, поездсем мĕнле çӳренине пăхнă, ытти-сем курман чухне вăрттăн блокнот çине çырса илме хăтланнă. Иккĕлентерекан пассажира тытнă. Вăл фашистла тăшман пулнă. (ТАСС).

Коммунистсем пуçарнипе

ШАХАСАН. Авăспӳрт Кипечри «Березовка» колхозра ВКП(б) кандидачĕсен группине А. Мухин юлташ ертсе пыраль. Группăра 4 коммунист тăрать. Группăн парторгĕ Мухин юлташ 3-мĕш çул ĕнтĕ колхоз председателĕ пулса ĕçлет. ВКП(б) членĕн кандидачĕсем: А. Степанов — колхоз учетчикĕ, Кирилл Григорьев — строительнăй бригадăн бригадирĕ пулса ĕçлеççĕ. Кандидатсен группи колхозăн хуçалăхне ертсе пырать. Кандидат группи колхозниксен ĕçри активлăхне пуçарса ертсе пырассине нумай лайăхлатрĕ.

Юлашки икĕ уйăх хушшинче колхоз 4000 центнер тырă çăрекен амбар, 1000 чăх-чĕп вырнаçмалăх тата 60 лаша вырнаçмалăх витесем, 43 сысна вырнаçмалăх çурт туса пĕтерчĕ, пахчасимĕçсене хума пысăк подвал тума тытăннă.

Колхозри строительнăй бригадăра 9 колхозник ĕçлеççĕ. Бригадăри колхозниксем строительство ĕçне питĕ лайăх туса пыраççĕ.

Колхозра уйăхри ĕçĕсем те ăнăçлăн вĕçленсе пыраççĕ. 389 гектар çинчи кĕрхи тырăсене производствăллă планпа пăхнă срокран маларах пуçтарчĕç. Çуртыррисене вырса пухасси тата та ăнăçлăрах пырать. Ыраш вырнă чухне машинăсемпе усă курма май килмен пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсемпе туллин усă кураççĕ.

Çуртыррисене вырнипе пĕрлех, колхозра тырпулсене капана хывас, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас, государствăна тырпул тăратас ĕçсем ăнăçлă пулса пыраççĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене парса татас ӳлĕшпе районра малта пырать. Обязательнăй поставка шучĕпе памалли тырпула парса татнă, натуроплата тырринне пама тытăннă. Колхоз государствăна ашкакай, çăмарта, сĕт-çу парса татнă. Колхозниксем те хăйсен обязательствисене вăхăтра пурнăçлаççĕ.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетме государство панă плана тултараççĕ. Халĕ ĕнесем 60 пуç, сурăхсем 54 пуç, сыснасем 130 пуç пур. Вĕсем валли апат çителĕклĕ хатĕрленĕ, 75 тонна силос хывнă.

В. ЧЕРНОВ.

Комсомолецсем хĕрӳ ĕçре

КАНАШ. «Комсомол» колхозра уборка хĕрӳллĕн пырать. Колхозниксем тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕресшĕн кĕрешеççĕ. Комсомолецсем ялан малта пыраççĕ. Вĕсем кăçалхи вăйлă тырпула пухса кĕрес ĕçе пурте хастарлăн хутшăнчĕç. Комсомолецсенчен ятарласа уйăм бригада организациленĕ. Бригадăра 18 комсомолец, унăн бригадирĕ Константин Андреев. Бригадăри комсомолецсенчен нумайĕшĕ служащисем, çавăнпа вĕсем кăсхине 6 сехетрен пуçласа 11 сехетчен, ирхине — 3 сехетрен пуçласа çичĕ сехетчен ĕçлеççĕ. Уборка вăхăтĕнче стахановла ĕçлесе мала тухнă комсомолецсенчен пĕри—Петр Краснов. Вăл ялсовет исполкомĕн секретарĕ. Кăйăн ĕçне яланах тĕплĕ тăвать. Нумай çулсем хушши агитколлектива ертсе пырать. Çавăн пекех медсестра М. Егорова, учитель Г. Никитин, колхозри счетовод Н. Андреев, учетчик К. Андреев, избач С. Михайлов юлташсем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Комсомолецсем агитациллĕ-массăллă ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çынетрĕç. Вĕсем большевикла агитацине халăхи вăхăтри ыйтусемпе сыхăнтарса туса пыраççĕ. Агитаторсем ăнлантарнине пула халиччен ĕçе тухман колхозниксем ĕçе тухаççĕ, тăрăшса ĕçлеççĕ. Нумайĕш колхозниксем кĕрхи тырăсене производствăллă планпа пăхнă срокран маларах пуçтарчĕç. Çуртыррисене вырса пухасси тата та ăнăçлăрах пырать. Ыраш вырнă чухне машинăсемпе усă курма май килмен пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсемпе туллин усă кураççĕ.

Çуртыррисене вырнипе пĕрлех, колхозра тырпулсене капана хывас, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас, государствăна тырпул тăратас ĕçсем ăнăçлă пулса пыраççĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене парса татас ӳлĕшпе районра малта пырать. Обязательнăй поставка шучĕпе памалли тырпула парса татнă, натуроплата тырринне пама тытăннă. Колхоз государствăна ашкакай, çăмарта, сĕт-çу парса татнă. Колхозниксем те хăйсен обязательствисене вăхăтра пурнăçлаççĕ.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетме государство панă плана тултараççĕ. Халĕ ĕнесем 60 пуç, сурăхсем 54 пуç, сыснасем 130 пуç пур. Вĕсем валли апат çителĕклĕ хатĕрленĕ, 75 тонна силос хывнă.

В. ЧЕРНОВ.

Хăнăхăвăн çук çынсем ĕçлеççĕ. Çавăнпа та шкул çумĕнчи çĕр участокĕсем хакламанни учительсем хушшинче те, вĕренекенсем хушшинче те пулмалла мар. Шкул участокĕнчи ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе, вĕсенчен усă пĕлĕт айĕнчи лабораторисем туса хумалла. Программăри материалсене вĕреннĕ май ачасене практикăллă хăнăхусем парса пырас задача—пĕтĕм учительсен хисеплĕ задачи. Çав задачăна ăнăçлăн пурнăçлассишĕн мĕнпур учительсен кăçалхи вĕренӳ çулĕнче çине тăрса ĕçлемелле.

Г. ЕФРЕМОВ.

„Марс“ колхоз вăрçă кунĕсенче

Йăлтах фронт валли! Йăлтах çĕнтерӳ валли! Ку вăл «Марс» колхоз членĕсен кулленхи ĕçри боевой лозунгĕ. Çак лозунгпа ĕçлеççĕ вĕсем, çирĕплетеççĕ тыла, пулăшаççĕ фронта.

Германи фашизмĕ пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăнни колхозниксене вĕçĕ-хĕррисĕр тарăхтарчĕ. Вĕсен ĕçри ĕçченлĕхĕ, пуçарулăхĕ ӳсрĕ.

— Халĕ 1918—1921 çулсем мар. Эпир 1941 çулта пурăнатпăр. Юратнă Сталин юлташ ертсе пынипе çирĕп те тĕреклĕ колхозсем турăмăр. Кашни колхоз—лаян оборона крепоçĕ. Çакăн пек крепоçсем çине перĕнсе саланĕç фашистсен йытăтĕвĕсем,—тет колхоз председателĕ Абдул Гаязов юлташ.

* * *

Пирĕн умра колхозăн анлă хирĕç. Унтах ем-ешĕл шăтса ешĕрекен ыраш калчăн пусси, колхозниксен ĕçчен аллисем вырса пуçтарнă пиншер çĕмел-суратсем. Çырма хĕрринче улăх енче—пысăк капансем. Ав унта, колхозăн сачĕ патĕнче, колхозниксем хĕрсе авăн кĕрхи тырăсене производствăллă планпа пăхнă срокран маларах пуçтарчĕç. Çуртыррисене вырса пухасси тата та ăнăçлăрах пырать. Ыраш вырнă чухне машинăсемпе усă курма май килмен пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсемпе туллин усă кураççĕ.

Çуртыррисене вырнипе пĕрлех, колхозра тырпулсене капана хывас, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас, государствăна тырпул тăратас ĕçсем ăнăçлă пулса пыраççĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене парса татас ӳлĕшпе районра малта пырать. Обязательнăй поставка шучĕпе памалли тырпула парса татнă, натуроплата тырринне пама тытăннă. Колхоз государствăна ашкакай, çăмарта, сĕт-çу парса татнă. Колхозниксем те хăйсен обязательствисене вăхăтра пурнăçлаççĕ.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетме государство панă плана тултараççĕ. Халĕ ĕнесем 60 пуç, сурăхсем 54 пуç, сыснасем 130 пуç пур. Вĕсем валли апат çителĕклĕ хатĕрленĕ, 75 тонна силос хывнă.

В. ЧЕРНОВ.

Вĕренекенсене практикăллă ĕçе хатĕрлер

Тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетес ĕçре шкулсем те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Ялхуçалăх ĕçне хутшăнса, тимĕр-тăмăр пуçтарса, уйри тырпула, тырă складчĕсене, фабрикăсемпе заводсене, чугунçулсене т. ыт. объектсене сыхласа; шпионсемпе диверсантсене тытма пулăшса, пионерсемпе шкул ачисем пĕтĕм совет халăхне çĕнтерӳ туптама пулăшаççĕ.

Шкулта вĕренекенсем производствăллă ĕçе хутшăнни оборона ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, ачасене практикăллă хăнăхусем парасси çине, вĕсене пулас практикăллă ĕçе хатĕрлесси çине, вĕренӳ ĕçне ялхуçалăхпе, техникăпа, çар ĕçĕпе сыхăнтарасси çине кăçалхи вĕренӳ çулĕнче татах та тимлĕнрех çавăрăнса пăхни кирлĕ.

Партин XVIII съездĕнче вĕренекенсене практикăллă ĕçе хатĕрлесси çинчен Молотов юлташ каланă сăмахсене тата РСФСР Наркомпросĕ 1940 çулти августăн 26-мĕшĕнче «Ялти вăтам шкулсен ĕçне лайăхлатасси çинчен» кăларнă приказа пирĕн учительсем хăпăл туса кĕтсе илчĕç. Учительсем шкулта лабораторилле ĕçсем ытларах туса ирттерме, опытсем тума, вĕренекенсене практикăллă ĕçе ытларах явăçтарма пуçларĕç; вĕренекенсене тĕрлĕрен кĕнекесемпе, справочниксемпе, таблицăсемпе хăйсем тĕллĕн ĕçлеме, опытсем, практикăллă ĕçсем валли тĕрлĕрен хатĕрсем тума вĕрентеççĕ т. ыт. тата.

Шкулсем тата учительсем нумайĕшĕсем вĕренӳ ĕçне ялхуçалăх тата техника ыйтăвĕсемпе сыхăнтарас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕç. Çапла, Кусловкка вăтам шкулĕнче вĕренекенсем физикăна вĕреннĕ май (учитель Гордеев юлташ) электромонтаж ĕçĕсене сахал мар тунă: электричество сетьне тĕрĕслеме, юрăхăр вырăнсене юсама, хăпăр ванчăк патронсене, предохранительсене, выключательсене улăштарнă. Шкулта промышленноçра усă куракан электромоторсемпе генераторсене вĕренмелли кружок ĕçлесе пынă. Вĕренекенсем «Электролитри ток» ятлă темăна вĕреннĕ май аккумулятора зарядка тăвас, ăна валли раствор хатĕрлес ĕçпе тата лампăллă реостат, умформер тумалли майсемпе паллашнă.

Физика предметне практикăпа сыхăнтарас ĕç Хĕрлĕ Чутай вăтам шкулĕнче те аван пырать (учитель Башкиров юлташ). Кунта фотокружокăн, двигательсемпе ялхуçалăх машинисене вĕренмелли кружокăн тата метеорологи кружокĕн ĕçĕсене лайăх йĕркеленĕ. Ку шкулта наукăри пур законсене те опыт туса вĕренеççĕ, практикăллă ĕçсем туса çирĕплетеççĕ. Вĕренекенсем физикăпа тарăн, çирĕп пĕлӳсем илеççĕ.

Математикăна вĕрентнĕ май практикăллă хăнăхусем парас тĕлĕшпе Тĕрле. мери вăтам шкулта ĕç аван пырать (преподаватель Герасимов юлташ). Кунта вĕренекенсемпе çĕр виçес, çурт-йĕрсен, улăм-утă куписен калăпăшĕсене шутласа кăларас ĕçсем туса ирттернĕ; шут-шăрçине, логарифма линейкипе шутламалли ĕçсем сахал мар пулнă; ăсра шутлас ĕçе тимлĕн туса тыраççĕ.

Хăшпĕр шкулсенче ачасене колхозсенчи шутĕç кĕнекисемпе, ĕçкунĕсене шута илмелли йĕркесемпе паллаштараççĕ. Задачăсем шутланă чухне учительсем шурнăçран илнĕ чĕрĕ содержанилле задачăсемпе ытларах усă кураççĕ.

Çавăн пек паха тĕслĕхсем ытти предметсем тăрăх та сахал мар илсе кăтартма пулать. Çаксем вĕсем пурте вĕренекенсене практикăллă ĕçе хăнăхусем парас ĕçре учительсем çине тăрса ĕçленине, çак ĕçре кирлĕ майсемпе ăнăçлăн усă курма пĕлнине кăтартса параççĕ.

Вĕренекенсене практикăллă ĕçе хăнăхусем парас тĕлĕшпе шкулсем умĕнче çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче мĕнле задачăсем тăраççĕ-ха?

Чăн малтанах, общеобразовательнăй предметсене вĕрентес ĕçе лайăхлатасси çинчен каламалла, мĕншĕн тесен, пур практикăллă ĕçе валли те пĕлӳлĕхĕн тĕп никĕсĕ пулса тăракан предметсене пĕлни кирлĕ. Уроксене лайăх хатĕрленсе, вĕсене пысăк пахалăхпа ирттерсе пырса, вĕренекенсене киле задани парас ĕçе тĕрĕс йĕркелесе, урокра опытсем туса пырса, лабораторилле ĕçсемпе экскурсисене йĕркеллĕн туса пырса, вĕренекенсене харпăрхăй тĕллĕн кĕнекепе ĕçлеме, лабораторисенче, мастерскойсенче, шкул участокĕсенче ĕçлеме вĕрентсе пырса, ачасен пĕлӳлĕхне кунран-кун ӳстерсе, çирĕплетсе пымалла.

Çавăнпа пĕрлех вĕсене хăйсем вĕренĕнĕ законсемпе тата чăнлăхсемпе промышленноçра, ялхуçалăхĕнче, çар ĕçĕнче, транспортра мĕнле усă курнипе паллаштармалла. Вĕренекенсем хăйсен пĕлĕвĕсене практикăри ыйтусемпе сыхăнтарма пĕлччĕр.

Математикăна вĕрентнĕ май ăсра тата çырса хăвăрт шутлама, процентсем, квадратсен тата кубсен таблицисемпе усă курма, тулли числосемпе тата дробьсемпе шут-шăрçи çинче действисем тума, рулеткăпа, экерпа, астролябипе усă курма, логарифма линейкипе шутлама вĕрентмелле; математикăпа артиллерире, вăрçă топографийĕнче т. ыт. ĕçре мĕнле усă курнине паллаштармалла. Физикăна вĕреннĕ май вĕренекенсене приборсемпе усă курма, çăмăлрах электромонтаж ĕçсене тума вĕрентмелле; винтовкăсенчен, тупăсенчен тĕл пересснă, самолетсем çинчен бомбăсем тĕл пăрахассин принципĕсемпе паллаштармалла, вăрçă ĕçĕнче усă кураканн оптически приборсене, звукоулавливательсене мĕнле тунине ăнлантарса памалла.

Естествознание вĕреннĕ май тăпрана çемçетсе хатĕрлес тĕлĕшпе, йăвă е сайра акни, вăрлăха тасатса акни, протравливанипе яровизаци туса акни тырпул тухăçлăхне мĕнле улăмăнусем кӳнине сăнас тĕлĕшпе, удобрени туни тата çанталăк условийĕсем ӳсен-тăрана мĕнле влияни панине тĕпчес тĕлĕшпе практикăллă ĕçсем туса ирттермелле.

Химие вĕрентес ĕçе удобренисене тĕпчес ĕçпе, ӳсен-тăрансен кăмпаллă чирĕсене хирĕç кĕрешес, ялхуçалăхне сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсене хирĕç химиллĕ майпа кĕрешес ĕçсемпе сыхăнтармалла. Кунтах тата сывлăшран тапăнпинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланмалли майсемпе те паллаштармалла.

Çавăн пекех программăри ытти дисциплинăсене те совет халăхĕн практикăллă ĕçĕсемпе сыхăнтарса пыма нумай тĕрлĕ майсем пур.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче вăрçă ĕçне вĕренес ĕçе пысăк вырăна хуни кирлĕ. 7-мĕш класран вĕренсе тухакан кашни ача БГТО нормисене, вăтам шкултан вĕренсе тухакан кашни ача ГТО нормисене пама тивĕçлĕ.

Рисованипе черчени предмечĕсене час паманни пулмалла мар. 7-мĕш класран вĕренсе тухакансен чертеж тумалли инструментсемпе усă курма, ӳкерчĕксем тума пĕлмелле. Вăтам шкулран вĕренсе тухакансен технически детальсен чертежĕсене тума тата вĕсене ăнлама пĕлмелле.

Вĕренекенсен интересĕсене, пултарулăхĕсене шута илсе, тĕрлĕрен кружоксен ĕçĕсене аванах йĕркелени кирлĕ. Наукăпа техника кружокĕсем, физкультура кружокĕсем, художествăллă кружоксем вĕренекенсене хăнăхусем парас, вĕсене практикăллă ĕçе хатĕрлесенĕпе пысăк усă кӳме пултараççĕ. Кунсăр пуçне тата вĕренекенсен общественăллă усăллă ĕçĕ çине те тимлĕрехĕн çавăрăнса пăхни кирлĕ.

Вĕренекенсене практикăллă хăнăхусем парас ĕçре шкул çумĕнчи çĕр участокĕсем паха никĕс пулса тăраççĕ. Çавăнпа та шкул çумĕнчи çĕр участокĕсене хакламанни учительсем хушшинче те, вĕренекенсем хушшинче те пулмалла мар. Шкул участокĕнчи ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе, вĕсенчен усă пĕлĕт айĕнчи лабораторисем туса хумалла. Программăри материалсене вĕреннĕ май ачасене практикăллă хăнăхусем парса пырас задача—пĕтĕм учительсен хисеплĕ задачи. Çав задачăна ăнăçлăн пурнăçлассишĕн мĕнпур учительсен кăçалхи вĕренӳ çулĕнче çине тăрса ĕçлемелле.

Г. ЕФРЕМОВ.

Комсомолецсем хĕрӳ ĕçре

КАНАШ. «Комсомол» колхозра уборка хĕрӳллĕн пырать. Колхозниксем тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕресшĕн кĕрешеççĕ. Комсомолецсем ялан малта пыраççĕ. Вĕсем кăçалхи вăйлă тырпула пухса кĕрес ĕçе пурте хастарлăн хутшăнчĕç. Комсомолецсенчен ятарласа уйăм бригада организациленĕ. Бригадăра 18 комсомолец, унăн бригадирĕ Константин Андреев. Бригадăри комсомолецсенчен нумайĕшĕ служащисем, çавăнпа вĕсем кăсхине 6 сехетрен пуçласа 11 сехетчен, ирхине — 3 сехетрен пуçласа çичĕ сехетчен ĕçлеççĕ. Уборка вăхăтĕнче стахановла ĕçлесе мала тухнă комсомолецсенчен пĕри—Петр Краснов. Вăл ялсовет исполкомĕн секретарĕ. Кăйăн ĕçне яланах тĕплĕ тăвать. Нумай çулсем хушши агитколлектива ертсе пырать. Çавăн пекех медсестра М. Егорова, учитель Г. Никитин, колхозри счетовод Н. Андреев, учетчик К. Андреев, избач С. Михайлов юлташсем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Комсомолецсем агитациллĕ-массăллă ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çынетрĕç. Вĕсем большевикла агитацине халăхи вăхăтри ыйтусемпе сыхăнтарса туса пыраççĕ. Агитаторсем ăнлантарнине пула халиччен ĕçе тухман колхозниксем ĕçе тухаççĕ, тăрăшса ĕçлеççĕ. Нумайĕш колхозниксем

„Марс“ колхоз вăрçă кунĕсенче

Йăлтах фронт валли! Йăлтах çĕнтерӳ валли! Ку вăл «Марс» колхоз членĕсен кулленхи ĕçри боевой лозунгĕ. Çак лозунгпа ĕçлеççĕ вĕсем, çирĕплетеççĕ тыла, пулăшаççĕ фронта.

Германи фашизмĕ пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăнни колхозниксене вĕçĕ-хĕррисĕр тарăхтарчĕ. Вĕсен ĕçри ĕçченлĕхĕ, пуçарулăхĕ ӳсрĕ.

— Халĕ 1918—1921 çулсем мар. Эпир 1941 çулта пурăнатпăр. Юратнă Сталин юлташ ертсе пынипе çирĕп те тĕреклĕ колхозсем турăмăр. Кашни колхоз—лаян оборона крепоçĕ. Çакăн пек крепоçсем çине перĕнсе саланĕç фашистсен йытăтĕвĕсем,—тет колхоз председателĕ Абдул Гаязов юлташ.

* * *

Пирĕн умра колхозăн анлă хирĕç. Унтах ем-ешĕл шăтса ешĕрекен ыраш калчăн пусси, колхозниксен ĕçчен аллисем вырса пуçтарнă пиншер çĕмел-суратсем. Çырма хĕрринче улăх енче—пысăк капансем. Ав унта, колхозăн сачĕ патĕнче, колхозниксем хĕрсе авăн кĕрхи тырăсене производствăллă планпа пăхнă срокран маларах пуçтарчĕç. Çуртыррисене вырса пухасси тата та ăнăçлăрах пырать. Ыраш вырнă чухне машинăсемпе усă курма май килмен пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсемпе туллин усă кураççĕ.

Çуртыррисене вырнипе пĕрлех, колхозра тырпулсене капана хывас, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас, государствăна тырпул тăратас ĕçсем ăнăçлă пулса пыраççĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене парса татас ӳлĕшпе районра малта пырать. Обязательнăй поставка шучĕпе памалли тырпула парса татнă, натуроплата тырринне пама тытăннă. Колхоз государствăна ашкакай, çăмарта, сĕт-çу парса татнă. Колхозниксем те хăйсен обязательствисене вăхăтра пурнăçлаççĕ.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетме государство панă плана тултараççĕ. Халĕ ĕнесем 60 пуç, сурăхсем 54 пуç, сыснасем 130 пуç пур. Вĕсем валли апат çителĕклĕ хатĕрленĕ, 75 тонна силос хывнă.

В. ЧЕРНОВ.

Йăлтах фронт валли! Йăлтах çĕнтерӳ валли! Ку вăл «Марс» колхоз членĕсен кулленхи ĕçри боевой лозунгĕ. Çак лозунгпа ĕçлеççĕ вĕсем, çирĕплетеççĕ тыла, пулăшаççĕ фронта.

Германи фашизмĕ пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăнни колхозниксене вĕçĕ-хĕррисĕр тарăхтарчĕ. Вĕсен ĕçри ĕçченлĕхĕ, пуçарулăхĕ ӳсрĕ.

— Халĕ 1918—1921 çулсем мар. Эпир 1941 çулта пурăнатпăр. Юратнă Сталин юлташ ертсе пынипе çирĕп те тĕреклĕ колхозсем турăмăр. Кашни колхоз—лаян оборона крепоçĕ. Çакăн пек крепоçсем çине перĕнсе саланĕç фашистсен йытăтĕвĕсем,—тет колхоз председателĕ Абдул Гаязов юлташ.

* * *

Пирĕн умра колхозăн анлă хирĕç. Унтах ем-ешĕл шăтса ешĕрекен ыраш калчăн пусси, колхозниксен ĕçчен аллисем вырса пуçтарнă пиншер çĕмел-суратсем. Çырма хĕрринче улăх енче—пысăк капансем. Ав унта, колхозăн сачĕ патĕнче, колхозниксем хĕрсе авăн кĕрхи тырăсене производствăллă планпа пăхнă срокран маларах пуçтарчĕç. Çуртыррисене вырса пухасси тата та ăнăçлăрах пырать. Ыраш вырнă чухне машинăсемпе усă курма май килмен пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсемпе туллин усă кураççĕ.

Çуртыррисене вырнипе пĕрлех, колхозра тырпулсене капана хывас, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас, государствăна тырпул тăратас ĕçсем ăнăçлă пулса пыраççĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене парса татас ӳлĕшпе районра малта пырать. Обязательнăй поставка шучĕпе памалли тырпула парса татнă, натуроплата тырринне пама тытăннă. Колхоз государствăна ашкакай, çăмарта, сĕт-

Колхозри комсомолецсем

ЕТЁРНЕ. Комсомолăн Алексеевкăри «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз сумĕнчи пуçламăш организацийĕ хăйĕн ĕçне аванлатсах пырать. Организацире 12 комсомолец. Пуçламăш организаци союзра тăман çамрăксемпе ĕçлет, комсомолецсен политикăллă пĕлӳлĕхне ӳстерес, вĕсен производствăри активлăхне хăпартас ĕçсене тивĕçлипе туса пырать.

Комсомол организацин секретарĕ Ф. Краснов юлташ колхозри агитколлектив руководителĕ пулса ĕçлет. Агитаторсем колхозра агитацине массăллă ĕçе урăхлатса, вăрçă вăхăтĕнчи пек, çĕнĕ йĕркепе туса пыраççĕ. Вĕсем колхозниксене хальхи вăхăтри ĕçсем çинчен ăнлантарса параççĕ. Агитаторсем хăйсен пĕтĕм ĕçне производство ыйтăвĕсемпе, Германи фашизмне хирĕç мĕнӳр ĕççыннисене кĕрешӳре çăклес ыйтупа сыхăнтарса пыраççĕ. М. Иванов, И. Иванов, Г. Сорокин, П. Краснов комсомолец-агитаторсем ялалах колхозниксемпе пĕрле ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозниксене кашни кунах Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕ çинчен, Совет Информаци Бюровĕн сводкисене ăнлантарса параççĕ. Колхозниксене большевикла сыхăлăха ӳстерме чĕнеççĕ, вăрçă ĕçне вĕрентеççĕ. Колхозниксене çар ĕçне вĕрентме ПВХО кружокĕсем организацилеççĕ. Нумаях пулмасть комсомолец Геннадий Сорокин юлташ ертсе пыракан ПВХО кружокĕнче вĕренӳ 11 колхозник ПВХО значокĕн нормисене пачĕç. ПВХО инструкторĕсем М. Васильевпа П. Краснов лайăх ĕçлеççĕ. Колхозниксене сывлăшран тапăнниничен сыхланма вĕрентеççĕ.

Ф. Краснов юлташ агитаторсемпе час-часах канашлусем туса иртторет. Унта агитаторсен отчетне итлеççĕ, малашне мĕнле ĕçлемелли çинчен калаçса татăлаççĕ. Агитацине массăллă ĕçе куллен туса пынă май, колхозра хуçалăх ĕçĕсем вăхăтра пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Колхозниксем ирхине ирех ĕçлеме пуçласа çĕрле тин киле тавăрăнаççĕ. Ĕç нормине тултарман колхозниксем сук. Комсомолка Мария Васильева кунсеренех 300—350 кĕлте вырса сыхать. Колхоз кĕракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртторчĕ.

Комсомолецсем колхозра ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Н. Яковлев — колхозри счетовод, М. Иванов — звеновод, Г. Яковлев — весовщик, Ф. Гаврилова — сĕт-çу фермин чи лайăх доярки т. ыт. те. Вĕсем пурте хăйсен вырăнĕсенче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

Комсомол организаци союзра тăман çамрăксемпе лайăх ĕçлет. Комсомолецсем çамрăксемпе час-часах пухусем туса ирттореççĕ, ĕçре хăйсем пек примерлă та хастарлă пулма вĕрентеççĕ, ĕçе ярăстараççĕ. ВЛКСМ уставĕпе палăштараççĕ. Нумаях пулмасть 7 çамрăка комсомол ретне илнĕ, вĕсенчен иккĕшĕ хĕрачасем.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Массăллă оборона ĕçĕ

ÇĔРПУ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă хыççăн районра чылай парторганизацисем хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтĕнчи пек урăхлатса çĕнетме тытăнчĕç. Парторганизацисем массăллă-оборонăллă ĕçпе ытларах интереслемме пуçларĕç.

Чăвашсен опытлă зоотехникăллă станцинчи пуçламăш парторганизаци (секретарĕ Евдокимов юлташ) хăйĕн ĕçне тĕпренех урăхлатса çĕнетрĕ. Парторганизацинче тăракан коммунистсем, комсомолецсем тата ытти работниксем кашни кун 2-шер сехет хушши çар ĕçне вĕренеççĕ. Занятисене программа тăрăх ирттореççĕ, час-часах практикăллă занятисем те пулаççĕ.

Станцинче ĕçлекен рабочисемпе служащисем СССР Совнаркомĕ обязательнăй йĕркепе пурне те ПВХО ĕçне вĕрентесси çинчен ăнланăнран сыхланма вĕрентеççĕ. Тревога вăхăтĕнче кам ăçта, мĕн тумаллине аван пĕлет. Кашни çын хăйĕн вырăнĕшĕн ответлă.

Станцинче ГСО нормисене пама вĕрентекен кружок та аван ĕçлет.

Тăван çĕршыв обороние тĕреклетес ĕçре станцинчи рабочисемпе служащисем малти ретре тăраççĕ. Вĕсем оборона фондне кашни уйăхра пĕр кунхи ĕç, укçине паписĕр пуçне, 11 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсене пачĕç.

В. ФАДЕЕВ.

Охотниксен парни

Шупашкарти охотниксен клубĕ иртнĕ вырсарникун хулари охотниксене пухса ушкăнпа кайăк кăвакалĕ тытма кайнă. Вăл кун охотниксен 4 бригади ĕçленĕ. Уйрăмах Постников юлташ ертсе пыракан бригада аван ĕçленĕ, вăл бригада 17 кăвакал тытнă. Çавăн пекех, Крылов юлташ бригади те 12 кăвакал тытнă.

Кăвакалсене пурне те оборона фондне панă.

М. Д—в.

Ыраш парса татрĕç

ИШЛЕЙ. Ярабайкасси ялсоветĕнче «Автогигант» колхоз 1941 çулăн государствăна сĕт-çу, çăмарта, çăм тата утă пĕтĕмпех парса татрĕ. «Самолет» колхоз государствăна 10 центнер пăрça леçсе панă. Ишек ялсоветĕнчи единоличник хуçалăхĕсем 1941 çулăн государствăна ыраш парса татрĕç.

Е. ТЮРИН.

Совет Çурçĕрĕн чулташĕсем çинче фашистсен вунпар летчикĕсем хăйсен самолечĕсемпе пĕрлех хăйсем валли вилĕм тупнă. **Укерчĕн çинче:** Действующи флотри краснофлотецсем персе ӳкернĕ «Ю—88» самолетăн ванчăкĕсене пăхаççĕ.

(ТАСС фотохроники).

Обществăллă пурлăха лайăх сыхлаççĕ

ÇĔРПУ. Обществăллă пурлăха вут-кăвартан, вăрă-хурахсенчен тата тăшмансенчен сыхласси иртнĕ çулсенче те колхозниксен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăнă. Ку ĕçе кăçал, отечественнăй вăрçă пынă, вăхăтра, татах та çирĕпрех организацилерĕç.

Сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентесси çинчен СССР Совнаркомĕ йышăннă постановленине пурнăçласа пынă май, районри пур колхозсенче те пушара хирĕç кĕрешекен звеносем организациленĕ. Вăл звеносенче пиншер колхозник тăрать, вĕсенчен 214 хĕрарăм.

Звено командирĕсене пушара хирĕç кĕрешмелли мероприятисемпе палăштарма ятарласа 5 семинар иртторнĕ. Семинарсенче пушартан сыхланмалли правилăсемпе мероприятисем çинчен 26 сехет лекци, вуланă.

Звено членĕсене колхозсенче çуртйĕрсем, тырă склачĕсем, фермăсем т. ыт. объектсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем вуткăвара сӳнтермелли хатĕрсене йĕркеллĕ тытаççĕ, хуралсене тата çĕрлехи дозорсене вăйлатса пыраççĕ. «Малалла» колхозра пушара хирĕç кĕрешекен звенора 41 çын тăрать. Звено членĕсем хăйсене çирĕплетсе панă объектсене лайăх сыхлаççĕ. Звено тăрăшнипе кашни кил умне шыв, хăйăр лартнă. Кашни кил тĕлĕнчех пурттăсем, сенĕксем, пусмасем, витресем, милĕксем, багорсем хатĕрлесе хунă. Пушар сӳнтермелли инвентарьсем юсавлă. Депо патĕнче 3 çын тата 2 лаша çĕрĕн-кунĕн тăраççĕ.

Колхозниксем хирти çĕмĕлсене итем çине турттарма пуçларĕç. Колхоз итĕмĕсем çинче çӳллĕ капансем ӳсеççĕ тата кунран-кунах йышлăланаççĕ. Колхозăн пĕтĕм пурлăхĕ итем çинче.

Итем çинчи пурлăха сыхлас ĕçе нихăçанхинчен вăйлатмалла. «Малалла» колхозра çĕмĕлсене сыхлас ĕçе аван йĕркеленĕ. Çĕмĕлсене пĕр-пĕринчен уйрăмрах лартаççĕ. Итем çинче шывпа хăйăр хатĕрленĕ. Насос та унтах. Звено членĕсем 2-шер çын итем çинче çĕрĕн-кунĕн тăраççĕ.

«Сталинец», «Коммунар», «Елаш», Хыркасси ялсоветĕнчи «КИМ», Рындинори «Молодая сила» т. ыт. колхозсенчи звеносем те обществăллă пурлăха сыхлас ĕçе аван йĕркеленĕ. Хуралçăсене çĕрлехи черетлĕ дозорсем лайăх тăраççĕ, пушар инвентарьсем юсавлă, кашни кил умĕнче шыв, хăйăр, пушар сӳнтермелли хатĕрсем пур.

Колхозниксемпе колхозницăсем обществăллă пурлăха сыхлас ĕçе вăйлатса тыла çирĕплетеççĕ.

Е. МАКСИМОВ.
НКВД Çĕрпӳ районотделенин пушар охранин инспекторĕ.

Ĕççыннисен патриотизмлă вăй-хăвачĕ

Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçăна пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленчĕ. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем фашистла варварсен йыткĕтĕвĕсене хирĕç пыракан вăрçăра нихăçан пулман паттăрлăхпа çалăçаççĕ. Тырра пурăнакан ĕççыннисем те нихăçан пулман пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсем тăшмана çĕнтерес ĕçре тăван Хĕрлĕ Çара пулăшса пыраççĕ, асса кайнă юнлă фашизм валли татăклă поражени тата вилĕм хатĕрлеççĕ. Çĕнтерӳ пирĕнтех пулать! Çакна лайăх ĕненет пирĕн халăх тата çĕнтерӳ тума мĕн кирлине пĕтĕмпех пама хатĕр тăрать. Çакна фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсен хирĕсенче çĕнĕ ĕç çĕкленĕвĕ ӳссе пыли, пиншер çынсем хăйсем перекетленĕ средствăсене оборона фондне хывни лайăх çирĕплетсе парать.

Канашри вагонсем юсакан заводри, депори тата ытти чылай предприятисенчи рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем пысăк хастарлăхпа ĕçленине пĕтĕм республика лайăх пĕлет. Вагонсем юсакан заводра двухсотниксен йышĕ ӳсет. Нумай рабочисем сывлăха тата вăл шеллемесĕр ĕçлеççĕ, канмалли кунсенче те станоксем умĕнче пулса, пиншер тенкĕлĕх çĕнĕ продукци туса калараççĕ. Вагонсем юсакан завод коллективĕ вуншар пин тенкĕ, чугунçул станцийĕнчи работниксем 2.155 тенкĕ, 5-мĕш дистанцири работниксем 2.805 тенкĕ оборона фондне хывнă. Çак укçасен пысăк пайне воскресниксенче ĕçлесе илнĕ.

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ мĕнпур вăя Хĕрлĕ Çара пулăшма, тăшмана çĕмĕрсе тăкас çĕре пама чĕнсе каланине пĕтĕм ĕççыннисем хĕрӳлĕн йышăнчĕç. Çĕнĕ Шелттемри селыпо работникĕсем 1.199 тенкĕ, Янкăлчари селыпо работникĕсем 2.507 тенкĕ тăван çĕршывăн оборона фондне хывнă. Августăн 28-мĕшне районĕпе илсен, оборона фондне пурĕ 114.942 тенкĕ пухăннă.

Пирĕн колхозсем вăйлансах пыраççĕ. Кăçал тырпулсем вăйлă пулни колхозсене экономика тĕлĕшпе тата ытларах вăйланма май парать. Çакна кура ĕнтĕ нумай колхозсем тата колхозниксем хăйсенчен ытлашши продуктсене оборона фондне параççĕ. Вăтакас Татмăшри Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 2 сурăх тата 13 килограмм пыл, Аччакассинчи «Красная Армия» колхоз 4 сурăх, Çĕнĕ Юнтапари «Коммунар» колхоз пĕр вăкăр, «Идея Ленина» колхоз пĕр ĕне, «Вторая пятилетка» колхоз 228 çăмарта оборона фондне панă.

Т. МАКОРОВ.

Канаш хули.

Çĕршыв оборонин фончĕ

Шупашкар хулинчи перекет кассине гражданин П. П. Волков 5000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пырса панă. Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн пĕр учрежденийĕнче ĕçлекенсен коллективĕ çĕршыв обороним фондне 1500 тенкĕ укçа пухса панă. Августăн 31-мĕшĕнче Шупашкарти «Медик» спорт обществин стадионĕнче массăллă физкультура вăййисем иртторнĕ чухне пухăннă укçана йăлтах çĕршыв обороним фондне панă.

ЕЛЧĔК. Елчĕк клубĕнчи драмкружок членĕсем лостановка лартса пухнă 214 тенкĕ укçана оборона фондне панă.

ШАХАСАН. Сителти «Победа» колхоз оборона фондне 10 центнер тырă, пĕр сысна, 750 тенкĕ укçа панă.

Хăйсен патриотлăхĕпе мухтанаççĕ

ЧУЛТĂВ. Чултăвăн Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем производствăлă активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Вĕсем çуртырри вираççĕ, аван çапаççĕ, государствăна тырă леçсе параççĕ. Пур ĕçре те хăйсен паха примерĕсене кăтартаççĕ.

Çуртырри вырнă çĕрте уйрăмăнах Т. Яковлев, В. Маркитанов, Е. Воробьева, Л. Магазеева комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ, нормăна кашни кунах 150—200 процент тултараççĕ. Союзра тăман çамрăксемпе пĕкул ачисем комсомолецсенчен пример илеççĕ. О. Селивановăна З. Матросова кулленех 450—500 кĕлте вираççĕ. Р. Магазеевпа Г. Магазеев пионерсем кунне 150—200-шер кĕлте тăваççĕ.

Çурхи тырăсене вырнипе пĕрлех, колхозра аван çапас ĕç хĕрӳллăн пырать. Кунта та комсомолецсем ялалах малти ретре. Комсомолец Павел Кулечников машинист пулса ĕçлет. Унăн молотилки яланах юсавлă, нихăçан та ĕçлемесĕр лармасть. Мĕншĕн тесен Павел ăна лайăх пăхать: ĕç пĕтнĕ хыççăнах шăлса тасатать, çу сĕрет, пĕр-пĕр çĕрте кăлтăк пулсан, çийĕнчех юсать.

Аван çапнă çĕрте ĕç вăйне тĕрĕс йĕркеленĕ. Кашни хăйĕн вырăнĕнче, кашни хăйĕн ĕçне пĕлет. Шитов А. Соколов, А. Ильин пионерсем, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен колхозра ытларах ĕçлесе юлас тесе, тăрăшса ĕçлеççĕ.

Кунĕпех ĕç вĕрет. Комсомолецсем ывăнма пĕлмеççĕ. Каçхи апат çинĕ хыççăн, ĕçлесе ĕшенинне пăхмасăр, çĕрле колхоз пурлăхне сыхлама тухаççĕ. Кашни итем е кĕлет умĕнчех хуралçă — комсомолецсене курма пулать.

А. МИХАЙЛОВ.

Гитлерла Германия вилĕм патнелле пырать

Адольф Гитлерпа унăн мĕнпур шухăнлă ушкăнĕ 8 çул каярах капиллер дворецне Германири влаçа тытса тăмалли мандат вырăнне кăтартнă программăна илсе пынă. Пĕр япаласăр пуçне—халиччен нихăçан пулман вăрă-хурахла çĕнĕ пысăк вăрçа хатĕрленсе, ăна пуçарса ярасси çинчен калакан обязательствăсăр пуçне, çав программăра ытти пурте улталлă пулнă. Тĕрĕссипе каласан, Германин чăн-чăн хуçисем—промышленность королĕсемпе Прусси юнкерĕсем гитлерла каскăнсенчен çавна кăна ыйтнă та.

Фашистла правительство малтан Европăна, унтан вара пĕтĕм тĕнчене чура туса хума ултă çул хушши яхăн хыпăнса ӳксех хĕçпăшал туптанă. Фашистсем хатĕрлекен вăрçа, Геббельсăн жуликла чĕлхипе каласа, «тĕрĕслĕхе тавăрса çирĕплетмелли» вăрçа тесе ят панă. Анчах Германин генеральнăй штабĕнче тата Гитлерăн Берхтесгаденри йăвинче, Германи халăхĕнчен пытарса, Европăн чĕрĕ ӳтне малтанах касса вакланă, Европăри халăхсем валли чуралăх шăли хатĕрленсе хунă,—çав шăпа тăрăх Европăри халăхсенчен крупписемпе феглерсен, Гитлера рейхсканцлер туса лартнăскерсен, чурисем тума тата фашистсем хуçа пулса тăнă çулсенче ытларах çаратмашкăн, мул ытларах ярса илмешкĕн майлă самантсене пĕрре те вĕсертмен Герман Геринг, Иоахим Риббентроп, Роберт Лей пек çĕнĕ миллионерсен чурисем тума палăртнă.

Икĕ çул каярах хура-хăмăр бандитсене тата вĕсен утаманне хăйсен тискер ĕçне пуçарса яма вăхăт çитнĕ пек туйăннă. Гитлер ун чухне хăйĕн хура чунĕнче мĕн сыхласа усранине уçăн кăтартса пама хăйман-ха. Вăл, опытлă шулер пек, вăхăт çитиччен хăй паллă тунă пĕр картăпа кăна выляна-ха: çавă вăл—территорисене Версальри мирлĕ договор тăрăх пайласа çирĕплетнине пĕтересси пулнă. Гитлерла банда пĕтĕм тĕнчене çĕнтерме вăрттăн хапсăнса Польшăна çаратнă чухне, Гитлер «ман тĕллевсем пысăк мар» тенĕ.

Гитлерăн хĕрсе кайнă хапсăнчăх пуçĕнче пулас тĕнчен картинисем пĕрин хыççăн тепри хăвăрттăн улшăнса пынă: акă тĕнчене касса вакланă, державăсене пĕр-пĕринчен уйăрнă, çакна тума вăл хăй нимĕнле ирсĕр майсенчен те—провокацирен, ултавран, диверсирен, çынсене сутăн илессинчен, хăратассинчен, илĕртессинчен йĕрĕнсе тăмасăр сахал мар тăрăшнă. Гитлер хăйĕн ĕçĕ яланах ăнăçлă пулса пырассине шаннă. Хăй тапăнакан çĕршывсене яланах пĕрерĕн-пĕрерĕн пĕтерсе пырассине ĕненнĕ. Мĕнпур этемлĕх çав ирсĕр разбойник куçне çĕрлехи пушă çул тăрăх пыракан хĕçпăшалсăр çулçӳревçĕ пек курăннă.

Гитлерла режим тунă преступленисем хушшинче Гитлерăн шанăçне пуринчен ытларах икĕ преступлени — Австри тата Чехословаки çĕршывĕсен никама пăхăнманлăхне пĕтерсе хуни çирĕплетсе панă пек курăннă. Çакăсем вĕсем ирсĕр сынвĕлеренсен çĕçри айне лекнĕ малтанхи жертвăсем пулнă. Польша çине варвăрла тапăнса кĕни фашистла пусмăрçăсен сĕмсĕрлĕхĕпе шанăçне ытларах хăпартлантарса янă. Чăн та, Польша вăйлăн хирĕç тăнă, вăл хăйĕн пурнăçне хаклă хакпа панă, анчах çапах та фашистсен çар машини Польшăннинчен нумай пысăкрах вăйĕпе Польшăна пусарса хунă.

Гитлер черетлĕ тапăну тума çĕршывсене тăрăшса суйласа илнĕ.

Фашистсен питех те вăйлăн хĕçпăшалланнă кĕтĕнĕсем кĕтмен çĕртен тапăнса кĕнине Норвеги, Дани, Бельги тата Голланди пек пĕчикĕ те вăйсăр çĕршывсем нумайччен хипĕç тăма пултарнă-и-ха?

Сутăнчăк правительсем хăйсен çĕршывĕн обороними тĕреклетес ĕçе нумай çулсем хушши уçăнах чăрмантарса пынине пула вăйсăрланнă Францине çапса аркатма Гитлерăн çапах та мĕнпур пек вăйне пухма лекрĕ. Гитлерăн вăйĕсем Франциниччен иккĕ хут пысăкрах пулнă. Гитлеровецсем сутăнчăксем хавшатнă çĕршыв çине, вăйхăвачĕ пусăрăннă, шанăçĕ икĕленĕ, хирĕç тăрас пултарулăхĕ пĕпĕнченех хуçалнă çĕршыв çине тапăнса кĕнĕ.

Çапах та кунта пĕр пысăк обстоятельство çинчен маннамалла мар. Франци çине пырса тапăниччен малтан Гитлерăн генералĕсене, Польшăри кĕске вăхăта пынă кампани хыççăн та, сывлăш çавăрма сакăр уйăх кирлĕ пулчĕ. Историксем ӳлĕм çак обстоятельство çине çавăрăнса пăхĕç. Гитлерăн, кашни разбойникла тапăну хыççăн, хăйĕн бандисене нумай уйăхсем хушши майĕпен çĕнĕ вăйсемпе тултарса, çĕнетсе пыма, вĕсен хĕçпăшалĕсене те çĕнетсе пыма май пулнă. Кашни çĕнĕ тапăну умĕн вара вăл хăйĕн черетлĕ жертвинчен вăйлăрах пулса тухнă. Çак факт вăл хăех «çирĕмле» стратеги çинчен калакан сӳпĕлти юмаха тăрă шыв çине кăларать. Фашистсен кашлайчăк стратегийĕн мĕнпур вăйĕ—Гитлерăн халиччехи противникĕсем вăйсăр пулнинче. Çав сратегине тунă авантюристсем, тĕнчери пуянлăхсен тата пĕтĕм суттĕнче шăписен уçăсине хăйсен аллинче тытса тăратнăр тесе, ĕненмеллипех ĕненнĕ.

Анчах Гитлер пĕтĕм этемлĕхе юнлă вăрçа туртса кĕртнĕренпе икĕ çул иртнĕ хыççăн, уйрăм çитенӳсем тунă пулсан та, вăл çирĕмпиллĕк çул ĕлĕкрех пĕтĕм Европăна юн ăшне путарнă, хăйсем те кайран çав юнпа чыхăнса ларнă кайзер ушкăнĕсем пекех, çĕнтерӳрен аяккра тăрать.

Гитлер Великобритание çĕнтерме пултараймарĕ, тĕнчери океансем çинче çĕнтерме унăн вăйĕ çитмест, тĕнчери чĕр-тавар вырăнĕсенчен унăн çулĕ ĕлĕкхи пекех пĕлĕнсе тăрать.

Юншăн çăтăнланса хыпăнса ӳкнĕ гангстер, Совет Союзĕ çине ултавлăн килсе тапăнса, çĕнĕ авантюра пуçарса ячĕ. Вăл пирĕн тăван çĕршыва хирĕç çапăçса çĕнтерӳçĕн чапне çăмăллăнах илĕп тесе шухăшланă, ку расра та пĕр наказанисĕрех разбойникланса сӳреме пултаратăп тесе шаннă вăл, çакна тума ултавлă çĕнĕ ялава, «большевиксене хирĕç пуçарнă крестовăй поход» ялавне кăна çĕклемелле, тенĕ вăл. Югославипе Грецине варвăрла таптаса пăрахнă хыççăн, Бухарестри, Софийăри, Хельсинкири, Братиславăри хăрхăм тарçăсем ун атти пуçне чуптума пĕшкĕннĕ хыççăн, хĕвел тухăçĕ ун умне хăех пырса ӳкĕ тесе шутланă Гитлер.

Гитлер хăй çăмăллăн çĕнтерессине шанса Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçласа янă, кун хыççăн вара пĕтĕм тĕнчипе хуçа пулса тăма тата Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕсене чура туса хума ăмсаннă. Хура-хăмăр вăр-хурахсем хăйсен чарусăр фантазийĕ витĕр вĕçĕ-хĕрисĕр тупăшсем курса тăнă.

Анчах тĕрĕссипе мĕн пулса тăчĕ-ха? Гитлерла захватчиксен мĕнпур хапсăнчăк ĕмĕчĕсем пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен тунă договора ултавлăн пăсса Совет Союзĕ çине килсе тапăннă кун арканса кайрĕç.

Гитлеризма хирĕç мĕнпур тĕнче пĕрлешрĕ. Гитлера хирĕç хăватлă коалици туса хуни тĕнчери вăйсем йышăнса тăракан вырăнсене тĕпренех улăштарчĕ.

Гитлеризма хирĕç, чи реакциллĕ государствăсен лагерьне хирĕç, вĕсен тарăнăйсемпе вассалĕсене хирĕç ирĕклĕхе юратакан, хăйсен аллинче чĕрĕ вăйсен вĕçĕ-хĕррисĕр резервисене тата материаллă ресурссене тытса тăракан, чи прогрессивлă та хăватлă государствăсен лагерĕ тухса тăчĕ.

Гитлеризм пĕр пĕччен тăрса юлнă. Пур енчен те ăна фронтсен вут-çулăмлă унки çавăрса илнĕ.

Вăрçă вăраха кайрĕ. Вăл гитлерла çар машинине хăвăртрах та хăвăртрах кыпласа пыракан вăрçă пулса тăчĕ.

Икĕ çул хушши хуçа пулса юн ĕçсе тăрса гитлерла тискер-кайăксем аркатнă тата çаралса юлнă Европăра 19 миллион çын çурнăçне пĕтернĕ. 19 миллион çын—вĕлернисем, аманнисем, выçăпа, чир-чĕрсемпе пĕтнисем, асаплантарса вĕлернисем. Фашистла захватчиксен кашни пусăмĕ вилесемпе, виселицăсемпе, масарсемпе палăлă пулса юлнă. Çапах та Гитлерпа унăн генералĕсем хăйсемшĕн чи хăрушă ĕç пулассине — «çиçĕмле» стратеги пуçĕпех арканса каяссине чарма пултайман.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

ЕЛЧĔК. Фронта валли тимĕр-тăмăр пухса парас ĕç районра вăйлăн пулса пырать. Комсомолецсемпе шкул ачисем ялти кашни киле кĕрсе тухаççĕ. Килхуçисем вĕсене кирлĕ мар тимĕр-тăмăрсене парса яраççĕ. «Красное знамя» колхозри комсомолецсем фронта валли 5 центнер, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем — 4 тонна, Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе пионерсем—10 тонна тимĕр-тăмăр пухса панă.

С. АРЛАНОВ.
В. ЕРТМАКОВ.

39 çын вĕрентсе кăларнă

КАНАШ. Кăçал районри колхозсем государствăна пахча-çимĕçсем (çĕрулми, сухан, кăшман) чылай типĕтсе параççĕ. Çак ĕçе ертсе пыма ятарласа кĕске срокла курс туса иртторнĕ. Курс витĕр 39 çын вĕрентсе кăларнă.

Çамрăксем малти ретре

ИШЛЕЙ. Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем производствăлă активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Вĕсем çуртырри вираççĕ, аван çапаççĕ, государствăна тырă леçсе параççĕ. Пур ĕçре те хăйсен паха примерĕсене кăтартаççĕ.

Çуртырри вырнă çĕрте уйрăмăнах Т. Яковлев, В. Маркитанов, Е. Воробьева, Л. Магазеева комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ, нормăна кашни кунах 150—200 процент тултараççĕ. Союзра тăман çамрăксемпе пĕкул ачисем комсомолецсенчен пример илеççĕ. О. Селивановăна З. Матросова кулленех 450—500 кĕлте вираççĕ. Р. Магазеевпа Г. Магазеев пионерсем кунне 150—200-шер кĕлте тăваççĕ.

Çурхи тырăсене вырнипе пĕрлех, колхозра аван çапас ĕç хĕрӳллăн пырать. Кунта та комсомолецсем ялалах малти ретре. Комсомолец Павел Кулечников машинист пулса ĕçлет. Унăн молотилки яланах юсавлă, нихăçан та ĕçлемесĕр лармасть. Мĕншĕн тесен Павел ăна лайăх пăхать: ĕç пĕтнĕ хыççăнах шăлса тасатать, çу сĕрет, пĕр-пĕр çĕрте кăлтăк пулсан, çийĕнчех юсать.

Аван çапнă çĕрте ĕç вăйне тĕрĕс йĕркеленĕ. Кашни хăйĕн вырăнĕнче, кашни хăйĕн ĕçне пĕлет. Шитов А. Соколов, А. Ильин пионерсем, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен колхозра ытларах ĕçлесе юлас тесе, тăрăшса ĕçлеççĕ.

Кунĕпех ĕç вĕрет. Комсомолецсем ывăнма пĕлмеççĕ. Каçхи апат çинĕ хыççăн, ĕçлесе ĕшенинне пăхмасăр, çĕрле колхоз пурлăхне сыхлама тухаççĕ. Кашни итем е кĕлет умĕнчех хуралçă — комсомолецсене курма пулать.

А. МИХАЙЛОВ.

Рузвельт выступленийĕ

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Ĕçлев кунĕнче улăпласа иртерĕ май Гайд паркра (президентăн çуллахи резиденцийĕ) радио тăрăх сăмах тухса калани чухне, Рузвельт çапла пĕлтернĕ: «Халиччен пуллă мĕнпур вăрçăсенчен чи хаяр та чи хăрушă вăрçăра çĕнтерӳ тăвас тĕлĕшне хальхи вăхăтра Америкăри ĕççынисем умĕнчи калама çук пысăк ответлăх тăрать. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи заводсенче, цехсенче тата арсеналсенче хĕпăшал туса кăларасси питех те пысăккăн сарăлса кайнă». Çавăн пек вăй хурса тăрăшни тата вăй хурса тăрăшма хавхалантаракан тĕллев пĕрлĕхĕ, тенĕ малалла Рузвельт, Гитлер пĕтĕм тĕнчипе пуçпулса тăма тăрăшнă май Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тĕп прависем, çав вăхăтрах ĕççыннисен прависем те хăрушлăх умне тухса тăнă факта ăнланса илнинчен килеççĕ. Ирĕклĕ çынсем пек пулса хăйсене хӳтлеме тухма тата хăйсен прависемшĕн вăрçма американецсем хальхин пек хатĕр тăни Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен историнче нихăçан та пулман-ха.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен хăватлă тинĕс-çар флочĕ пуррине, вăл вăйланса пынине тата Британи империйĕн, Голландин, Норвегин тата Российăн тинĕс-çар флочĕсем пур чухне çав флот вĕсемпе пĕрле тинĕссем çинче ирĕклĕн ишсе çӳремелле тума пултарнине тăшмансем пĕлсе тăраççĕ. Çав çĕршывсен тинĕс-çар флочĕсене пĕтерсе тăкас пулсан, вара Америка тинĕс-çар флочĕ хальхи вăхăтра та тата ӳлĕмрен те тинĕссем çинче ирĕклĕн ишсе çӳремелле тума пултараймасть. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарĕ кулсерен ӳссе пынине, юлашки çулталăк хушшинче Америка промышленноçĕн производстви калама çук пысăккăн ӳснине тата çав промышленноçĕн продукцийĕ гитлеризма хирĕç пыракан çапăçусен хирне кашни кунах ыларах та ытларах кайса тăнине тăшмансем пĕлеççĕ.

Анчах та, тенĕ Рузвельт, çавăн пек тăрăшни вăл çителĕклĕ мар-ха, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем мĕнпур продукцисене туса кăларассине ӳстермесен тата çав продукцине ишсе кайма тухнă çулсем çинче хальхинчен те ытларах сыласа пымасан, тăшмансем кивĕ фронтсенчи çапăçу хирĕнче хăйсен атакисене çăмăллăнах туса пырĕç, çĕнĕ фронтсенче те атакăсем тума пуçлĕç.

Гитлер наступленине чарса лартнă тесе шутлакан çынсене эпĕ пысăккăн асăрхаттаратăп, тесе калани Рузвельт, вĕсем çавăн пек шухăшлани пысăк хăрушлăх пулса тăрать. Çак вăрçăра пирĕн тăшман, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, сахалрах çитĕнӳ тунă чухне ăна икĕ хут пысăкрах вăйпа пырса çапма питех те меллĕ саманта пулса тăрать. Тăшмана поражени кӳрес тата тĕнчипе пуçпулса тăрас хăрушлăха ялanлăхах пĕтерсе хурас тесен, çапла тунипе вара чи усал тăшманпа компромисла мир тăвасси çинчен калаçассине тата шухăшлассине пĕтерес тесен, татах та ытларах вăй хумалла.

Пирĕн умра йывăр та хăрушă задачăсем тăраççĕ. Пирĕн планета çиниче Гитлер пусмăрлахан ăссăр вăйсене тапратса ячĕ. Çак вăйсене çаварлăхлас ĕçе пирĕн туллин хутшăнас пулать, мĕншĕн тесен, эпир хамăр ĕçсемпе çеç ларсан, хамăр çĕршывăн интересĕсене хӳтлессине çеç лăплансан, çав вăйсем пирĕн çĕршыв çине килсе тапăнма пултараççĕ. Гитлера хирĕçле пыракан кĕрешӳ вăрăма тăсăлма тата йывăр пулма пултарать.

Нацистсене кăмăллакан хăшпĕр «миротворительсем» пур, вĕсем çак задачăна пурнăçа кĕртме çук, тесе калаçаççĕ. Вĕсем тата мана Гитлерпа калаçусем пуçлама ыйтаççĕ, унăн çĕнтерӳллĕ сĕтелĕ çинчен çăкăр тĕпренчĕкĕсем йăлăнса ыйтма хушаççĕ. Тĕрĕсипе илсен, çавнашкал çынсем мана кучухнехи Бенедикт Арнольда (Бенедикт Арнольд — Америка генералĕ пулнă, вăл Америка ирĕке тухассишĕн вăрçнă вăхăтра американецсене сутнă) туса хурашăн тата маншăн чи хаклă шутланакан пирĕн ирĕклĕхрен, пирĕн чиркӳрен, пирĕн çĕршывран пăрăма хушаççĕ. Çакăн пек çула эпĕ малтанах сирсе пăрахрăм тата халĕ çĕнĕрен сирсе пăрахатăп.

Америка халăхĕн шухăшĕпе кăмăлне палăртса паратăп пуль, тесе шухăшласа, ун выраннe эпĕ çапла калатăп: Гитлера тата унăн нацистла вăйĕсене çĕмĕрсе тăкас тесе хамăр вăй çитнĕ таран эпир пурне те тăвăпăр.

Юлашкинчен Рузвельт Америка халăхнe çирĕп никĕссем çинче демократиллĕ мир тăвассишĕн тăрăшма чĕнсе

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ПОЛЬША ХАЛАХНЕ ВĔЛЕРСЕ ПĔТЕРЕССЕ.
Укерчĕк çинче: гестапо агенчĕсем имĕн аййăпăр Польша хĕрарăмĕсене персе вĕлерме илсе каначçĕ.

(ТАСС фотохроники).

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен сентябрĕн 2-мĕшĕнче пулса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ темиçе кун каярах, августăн 25-мĕшĕнчен пуçласа 29-мĕшне çитиччен, Гитлерпа Муссолини хĕвелтухăç фронтĕнче тĕл пулнă пирки Германипе Итали хаçачĕсем пĕлтерни çинче чарăнса тăнă. Германири информаци бюровĕ, калаçусенче «вăрçă аталанăвĕ тĕлĕшпе тата вăрçă вăраха тăсăлас тĕлĕшпе тăракан мĕнпур çарпа политика ыйтăвĕсене хускатнă» тесе, çирĕплетсе парать. Малтан каннайса çуйăхнă хыççăн, пушă сăмахсем перне панкаса ларнă хыççăн, Германипе Итали хаçачĕсем юлашкинчен çапах та чаршавăн пĕчĕк кĕтессине çĕклесе уçрĕç. Мĕн пытанса тăрать-ха çав парадлă тĕлпулу хыçĕнче? Чи малтан, калаçусен пысăк темисенчен пĕри **снабжени ыйтăвĕ**, уйрăмах, чĕр-тавар тăратас ыйту пулни палла пулса тухать. Унтан, пĕр хаварлисем иккĕшĕ те **хĕллехи кампани** пирки çине тăрсах калаçнă, паллах, çакă ĕнтĕ вăл çиçĕмле вăрçăн логикăллă тата политикăллă тупсăмĕ. Юлашкинчен вара, Муссолини «хĕвелтухăç фронтне войскăсем нумай яма тата Германипе Италирен промышленноçпа ялхуçалăх рабочийĕсен çĕнĕ ушкăнĕсене яма килĕшӳ пани».

Муссолинине ирĕксĕрех çавăн пек килĕшӳ партăрни çар тата политика енĕпе пăхсан мĕне пĕлтерет-ха? Çакă вăл Германи резервисем фронтра та, тылра та пĕтсе пынине пĕлтерет; çакă вăл, хитре сăмахсемпе тата чаплă тĕлпулусемпе витĕнсе, Италине Германи çарĕнче тата Германин вăйсăрланса юлнă промышленноçĕпе ялхуçалăхĕнче пулса тăнă таран тата анлă çурăка тултарса питĕрме хушнине пĕлтерет.

Германи, хĕвелтухăçĕнчи фронтра икĕ уйăх хушшинче 2 миллион çын ытла çухатнă хыççăн, Европăра тата пĕтĕм тĕнчере пуçпулса тăрас ĕмĕтшĕн юн тата тупă валли аш-какай парса татмалли парăма Италине чăнласах тытарма шут тытрĕ. Çакнашкал ĕнтĕ çав «историллĕ» тĕлпулăвăн чăн-чăн тупсăмĕ.

Мĕçе дивизи яма тултарать-ха Муссолини хĕвелтухăç фронтне? Добровольцсем яма хăтланни, пуриншĕн те палла, пĕтсе ларчĕ. Фашистсен суйласа илнĕ чăсĕсене ярас ĕçре питех те пысăк йывăрлăхсем сиксе тухрĕç, мĕншĕн тесен, Итали фашисчĕсем хĕвелтухăç фронтĕнче вĕсен юратнă тусĕсем—нимĕçсем хăйсен пуçĕсене хунине кăмăллараx параççĕ. Ĕç Итали çарне хĕвелтухăçĕнчи фронта ярасси патне çитсен, Муссолини вара, нимĕçсене сутăннă Бенитто Муссолини çинчен Итали халăхĕ мĕн шухăшланине пĕлĕ.

Грузчиксем лайăх ĕçлеççĕ

Шупашкар пристанĕнчи грузчиксен бригадирĕ Митрофанов юлташ хăйĕн бригадинчи ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Çав майпа грузчиксен бригади ĕç нормине ытлашшипех тултарса пырать. Отечественнăй вăрçă пуçланнă хыççăн ку бригадăра грузчиксен йышĕ чакнă пулсан та, вĕсем халĕ ĕç нормине кулленех кашни сменăра 140—150 процент тултарса пыраççĕ. Августăн 28-мĕшĕнче 8 сехет хушшинче баржа çинчен 150 тонна груз пушатмалла пулнă. Çав груза грузчиксен бригади 6 сехет те 30 минута хушшинче антарса пĕтернĕ. Уйрăмăнах грузчиксем Митрофанов, Соловьев, Ефимов юлташсем кашни сменăра ĕç нормине ытлашшипех тултарса ытти юлташсене лайăх примерсем кăтартса ĕçлеççĕ. Иртнĕ вырсарникун грузчиксем воскресник туса 132 тенкĕлĕх ĕçленĕ. Укçине оборона фондне панă.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

Республикăри уйăхирсенче

КУКЕÇ, сентябрĕн 3-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Районĕпе пучахлă тырăсене 71,2 процент, пăрça йышши культурăсене 71,5 процент вырса пуçтарнă. Паянхи куна 10 колхоза яхăн çурхи тырăсене вырса пĕтереççĕ. «11 лет Октября», «Броневик» тата «Строитель» колхозсем паян вырса пĕтереççĕ. Ыран тепĕр 7 колхоз вырса пĕтерет. Пур колхозсенче те хĕрӳллĕ ĕç пырать, кашни колхозник ик-виçĕ сыннăн ĕçлеме тăрăшать. «Новый быт», «Путь Ленина» тата «Дружба» колхозсем ыраш кĕлтине капăна хывса пĕтерчĕç. Çак колхозсенче авăн çапас ĕçе те лайăх организациленĕ. Молотилкăсемпе çĕрле те авăн çапаççĕ. «Молния» колхоз 100 гектара яхăн çапса пуçтарчĕ. Çав вăхăтра хăшпĕр колхозсенче халĕ те авăн çапас ĕçе тивĕçлипе тытăнманха. «КИМ» колхозăн молотилки ахалех ларать.

Чылай колхозсенче лаша вăйĕпе тĕрĕс усă курараççĕ. «Новый быт» колхоз кĕрхи çĕртме тума 6 лаша уйăрнă, вĕсем кулленех 9 гектар сухалаççĕ. Çапла вара, суха тума тухнăранпа колхоз 60 гектар ытларах сухалать. Крупская, Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче те çĕртме сухи тума ятарласа лашасем уйăрса панă. Суха тума уйăрнă лашасемпе урăх ĕçре усă курмаççĕ. Сентябрĕн 2-мĕшне районĕпе 786 гектар кĕрхи çĕртме тунă.

Е. ОСИПОВ.
Райçĕрĕç пайĕн агрономĕ.

ПЕРВОМАЙСКОЕ Чылай колхозсем çурхи тырăсене пуçса кĕртес ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. Пăлапуç Пашъялĕнчи «Комсомолец» колхоз çуртри вырнă хушăрах авăн çапас ĕçе организацилерĕ. Вырнă, хĕлтене аякка турттарса вăхăта ирттересе мар тесе, уйрах итем туса авăн çапаççĕ. Колхозсенче уйхир ĕçĕсем пуçланнă кунранпах яслĕсем ĕçлеççĕ. Çакă ĕнтĕ ачаллă колхозницăсене чылай лайăхрах ĕçлеме пулăшать. «Комсомолец» колхозри çамрăксем пулăшнипе 30 лав ытларах çулçăлă апат касса хатĕрленĕ. Çапла 75 тонна силос хывнă. «Пионер» колхоз икĕ молотилкăпа авăн çапать. Çапла тырăна çавăн чухнех сортировкăсемпе тасатса хураççĕ. Çуртри вырнă çĕрте Е. Шайманова, М. Журавлева, И Долгова юлташсем куллен 0,20 гектар вырса çыхаççĕ.

А. ТУКМАНОВ.
В. ДАВЫДОВ.

ÇЕРПУ, сентябрĕн 3-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Пучахлă тырăсене пурĕ 86 процент пуçтарса кĕнĕ. Комбайнсемпе 506 гектар вырса пуçтарнă. Районри малта пыракан колхозсем («Клим Ворошилов», Жданов ячĕпе тăракан колхозсем, «КИМ») тĕштырăсемпе пăрça йышши культурăсене пĕтĕмпех пуçтарса кĕнĕ. 18 колхоз кĕраки тумалли плана ирттерсе тултарнă. Çавăн пекех 18 колхоз тырпулсене пĕтĕмпех вырса пĕтерсе, пăрça йышши культурăсене те çапса хунă. Пур колхозсенче те пскех авăн çапас ĕç пырать. Районĕпе 4.072 гектар çинчен пуçтарса кĕртнĕ тырпула çапса пĕтернĕ. Машинно-тракторнăй станцин молотилкисемпе 746 гектар çинчи тырпула çапнă.

Общественнăй выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апат çителĕклĕ таранах пултăр тесе 1.244 тонна силос хывнă. Силос хывасси кулленех ӳссе пырать. Сентябрĕн 7-мĕшĕнче воскресник пуласа иртет. Çак кун районри пур çамрăксем те силос хывас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Л. АНИСИМОВ.
Райçĕрĕç пайĕн агрономĕ.

Колхоз пурлăхне çирĕп сыхлаççĕ

ЭЛЕК. Комсомолăн Шурăçри пуçламăш организацийĕ отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Пушара хирĕç кĕрешекен ирĕклĕ дружинăпа сыхăнса ĕçлесе, кашни пӳрт умне типĕ хăйăр тата шыв лартмалла турĕç. Хальхи вăхăтра комсомолецсем колхоз пурлăхне çирĕп сыхлаççĕ.

Хураварти «Заветы Ильича» колхозра та ятарласа комсомолецсен посчĕсем организациленĕ. Вĕсем колхозăн обществăллă пурлăхне, уйхирти, итемри тырпулне сыхлас ĕçе çирĕп йĕркеленĕ.

В. КАРПОВ.

Заем укçине тӳлесе татнă

ПЕРВОМАЙСКОЕ. «11 лет Чувашии» колхоз государствăна аш-какай, сĕтçу, çамарта парса татрĕ. Çавнашкалах, колхозниксем те хăйсен обязательствисене вăхăтра тултараççĕ. Заем укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Колхоз председателĕ А. Кудрявцев юлташ çĕршыв оборонин фондне 430 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пачĕ.

А. КОСОЙКИН.

Оборонăллă спектакльсем, концертсем, кинофильмсем

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланасанах, искусство работникĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçне оборона интересĕсене пăхăнтарса туса пыма тытăнчĕç.

● Академиллĕ театрăн Чăваш труппи республикăри районсем тăрăх оборонăллă концертпа çӳресе тавăрăнчĕ. Халь пит те хăвăрттăн «Батальон хĕвеланăçне каять» ятлă, фашизма хирĕçле пьеса хатĕрлет. Черетре — «Приказ по фронту» пьесăна лартасси. Ку пьесăра Ленинпа Сталинăн хастарлă соратникĕ пулнă çулăмлă большевик Серго Орджоникидзе образне кăтартнă.

● Академиллĕ театрăн выраç труппи, вăрçă пуçланасанах, Улатăр хулинче «Мой сын» ятлă, фашизма хирĕçле драмăна лартса панă. (Ăна Вĕтри писательĕ коммунист Шандор Гергель çырнă). Халĕ, çуллахи гастрольрен тавăрăннă хыççăн, выраç труппи писатель-орденоносец К. Симонов çырнă «Парень из нашего города» ятлă драмăна лартма хатĕрлесе çитерет. Ку произведени 1940 çулти хĕлле совет танкисчĕсем белофинсене паттăрăн çапса аркатнине кăтартса параль.

● Чăвашсен ача-пăча театрĕ çак кунсенче А. Бруштейнăн «Продолжение следует» ятлă, фашизма хирĕçле пьесине лартма тытăнчĕ. Хулари ачасем хушшинче спектакль пысăк ăнăçлăхпа пырать.

● «Главкинопрокатăн» Чăваш республикинчи контори хальхи вăхăтра хуласене, предприятисемпе колхозсене оборонăллă тата фашизма хирĕçле нумай кинофильмсем янă: «Профессор Мамлок», «Семья Оппенгейм», «Болотные солдаты», «Александр Невский», «Всадники», «Щорс», «Суворов», «Федька», «Чапаев», «Линия Маннергейма», т ыт. те. Уйрăмăнах, выраннче «Победа будет за нами» ятлă боевой киносборникене, кино-журналсене куракансем нумай.

● Халăх творчествин çурчĕ хулари чи лайăх хор кружокĕсен вăйĕпе оборонăллă концертсем пама хатĕрленет.

Çĕнĕ театр

Искусство ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленийĕ çĕнĕрен тепĕр театр коллективĕ организациленĕ. Ăна «Новый театр» тесе ят панă. Коллективра пурĕ 17 артист, вĕсем пурте кăçалччен Мускаври, Ленинградри тата ытти пысăк хулаçемчи театрсенче ĕçленĕ.

Театрăн çаланхи бази Улатăр хулинче пулать, анчах кунпа пĕрлех вăл Канашра, Çĕмĕрлере, Вăрнарта, Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра т. ыт. çĕрте те ĕçлемелле.

Коллективăн репертуарĕнче — фашизма хирĕçле тата оборонăллă пьесăсем: «Профессор Мамлок», «Смелые побеждают», «Депутат Балтики», пĕр актлă произведенисем, классикăллă пьесăсем.

Çĕнĕ театр хăйĕн ĕçне сентябрĕн 15-мĕш тĕлнелле пуçласа ярать. Малтан унăн спектаклĕсем Шупашкарта пулаççĕ, унтан вара вăл районсене тухса каять.

Л. АГАКОВ.

ХАЛĂХА ПĔЛСЕ ТĂМА

Самозащита групписен обязанноçĕсем

Фашистсен самолечĕсем Мускав çине тапăннă чухне пĕррехинче Макаров юлташ управляющи пулса ĕçлекен пурăнмалли çуртсем çине вут тивретсе яракан бомбăсем пăрахнă. Çурт тăрри çине виçĕ бомба ӳкнĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ вут чĕртсе яма ĕлкĕреймен, самозащита группин боецĕсем вăл бомбăсене ишсе урама пăрахнă та сӳнтернĕ. Виççĕмĕш бомба çурт тăррине шăтарса кĕрсе чердака кĕрсе ӳкнĕ. Постра тăракан Фомин юлташ бомба çине хăйăр сапнă, унтан ăна шыва пăрахса сӳнтернĕ.

Вут тивретсе яракан бомбăсене хирĕç кĕрешес çĕрте организованно пулни, çын хăйне хăй лăпкăн тыткалама пĕлни тата сывлăшран тапăннинчен сыхланма малтанах тĕплĕн хатĕрленсе тăни пысăк вырăн ыйăнать. Çав çуртсенче пурăнакансем фашистла ирсĕрсем пырса тапăнничен чылай малтан чердаксене, пусма картлашкисене тĕрлĕ çӳп-çапсенчен тасатнă, хăйăр тата шыв хатĕрлесе хунă, витресене вырăна çакнă, багорсемпе хĕскĕчсем, кĕреçесем, алшысем тата ытти япалăсем хатĕрлесе хунă пулнă.

Бомбăна сӳнтернĕ вăхăтра боец Петров вутпа пĕçертнĕ пулнă. Килхуçи хĕрарăмĕсем—санитаркăсем ăна медицина тĕлĕшпе сийĕнчех тивĕçлĕ пулăшу панă. Çавнашкал ытти ĕçсене те самозащита группин боецĕсем пурне те хăйсемех тунă.

Çак пример, нумай примерсенчен пĕри, сывлăшран килсе тапăннă вăхăтра тунă сиенсене хăварт пĕтерсе хурас çĕрте самозащита групписем мĕнле пысăк вырăн ыйăнса тăнине лайăх кăтартса парать. Çавăн пек группăсем тума кашнинех тăрăшмалла.

Çуртсенче 200—500 çын пурăнать пулсан, çавăн пек пысăк çуртсенче кашнинчех самозащита групписем организацилемелле. Çынсем йышлăн пурăнакан çуртсенче самозащита групписене кашни подъездрах тăвас пулать, пĕчĕк çуртсенче кварталсем тăрăх тумалла.

Самозащита групписем камсенчен тăраççĕ-ха? Кашни группăн начальник, группа пурлăхĕсен заведующийĕ тата йĕркелĕхе асăрхаса сыхласа тăракан, çĕмĕрсе тăкнă çурт-йĕрсене юсакан, пушара хирĕç кĕрешекен, химиллĕ тапăнуран сыхлакан тата санитарнăй звеносем пулаççĕ. СССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх, самозащита групписенче ĕçлеме арçынсене 16 çултан пуçласа 60 çула çитнисене, хĕрарăмсене 18 çултан пуçласа 50 çула çитнисене обязательнăй йĕркепе явăçтараççĕ.

Самозащита групписенче пуласси—хисеплĕ ĕç. ПВХО енĕпе постра тăракан кашни çын—тылри çарăн боецĕ.

Сывлăшран тапăннă вăхăтра çын хăйĕн постне пăрахса кайни—вăл тăшман валли çул уçса пани пулать. Çавăн пек çынсене дезертирсем тесе шутламалла.

Самозащита групписен боецĕсем килçуртсенче талăкĕпех дежурнăй тăраççĕ: сывлăшран килсе тапăнас хăрушлăх çинчен халăха вăхăтра пĕлтереççĕ; чирлĕ çынсене, стариксене тата ачасене газоубежищесене тата çавнашкал ятарласа тунă вырăнсене вырнаçтараççĕ, çурт çине бомба ӳксе сиен тусан, ишĕлсе аннă япаласене тасатаççĕ; бомбăсем тата бомба ӳкнине тухнă пушарсене сӳтереççĕ; газ сарăлнă участоксене дегазацилеççĕ, сураннăнисене пирвайхи пулăшу парараççĕ.

Сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнусенчен сыхланма пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентсе хатĕрлесси çинчен СССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх самозащита групписен боецĕсем хăйсен çеç вĕренмелле мар, ПВХО ĕçне вĕрентес çĕре çынсене пурне те явăçтармалла.

Самозащита групписене вĕрентсе хатĕрлемелли программăна 40 сехетлĕх тунă. Çав программа тăрăх çынсем пĕтĕмпех тăшман чăннипех тапăннă чухне тумалли ĕçсене вĕренмелле.

Сăмахран, санитарсем фугаслă бомбăсен ванчăкĕсем тивнине сураннăнă çынсене пирвайхи пулăшу пама вĕреннипе пĕрлех, отравляющи вещество-сем пырса лекнине тата вутра пиçсе сураннăнисене пирвайхи пулăшу пама та вĕренсе пымалла тата ыт. те.

Ал айĕнчи япаласемпе усă курса пирвайхи пулăшу пама пĕлес пулать. Пĕр пример илсе кăтартăпăр. Иприт тумламĕ çын ӳчĕ çине лексен, ăна ятарласа хатĕрленĕ (противохимически) пакетпа усă курса шăлса пăрахаççĕ. Анчах, вăл пулмасан мĕн тумалла? Ун пек чухне ăна шĕвек япалапа, краççинпа усă курса шăлса пăрахмалла. Марлĕ, мамăк е типĕтекен хут тата кĕмелле те краççинпа йĕпетсе иприт тумламĕ ӳкнĕ вырăна шăлса тасатмалла.

Тăшман вут тивретсе яракан бомбăсем ытларах пăрахать. Опыт çахна кăтартса панă: самозащита групписем малтанах тĕплĕн вĕренсе хатĕрленнĕ, çавăн пекех ку ĕçе пĕтĕм халăха вĕрентсе хатĕрленĕ тата организованно пулсан, вăл бомбăсем пирĕншĕн хăрушă мар. Мĕншĕн тесен, вĕсене çитĕнĕ çын çеç мар, подростоксем те çăмăллăнах сӳнтерме пултараççĕ тата вĕсене сӳнтермелли япаласем те йывăрах мар.

Тăшман пырса пăрахнă бомбăсене сийĕнчех тупса, вĕсене вут тивретсе яриччен сӳнтерес пулать. Вут тивретсе яракан бомбăсем патне хăрамасăр çитмелле, çынсене те çавăн пек тума вĕрентмелле. Бомба пырса ӳксен, ăна кĕреçепе ăсса, хĕскĕчпе хĕстерсе е тата алшăш тăхăнса алăпах илмелле те шыв тултарнă каткана е витрене тăпратмалла.

Хĕрлĕ Çар чăсĕсем нимĕçсен химически полксенчен пĕринне секретлă документсене тытса илнĕ. Вăл документсем гитлерла банда Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра отравляющий веществосемпе усă курма хатĕрленни çинчен каланă. Пирĕн чи таса обязанность—химиллĕ тапăнуран сыхланма хатĕрленсе çитесси. Çынсене противогазпа усă курма вĕрентмелле. Çавăнпа пĕрлех, халăхăн йышлă массисене отравляющи веществосенчен противогазпа çеç мар, тата ытти питĕ те çăмăл, ал айĕнчи япаласемпех сыхланма май шурри çинчен тĕплĕн каласа памалла. Химиллĕ тапăну вăхăтĕнче камăн та пулсан противогаз пулмасан, унăн куçне хупмалла та, йĕпе тутăр витĕр сывламалла. Иприт ӳт çине пырса ӳкессинчен вăхăтлăха плащ, мамăкран тунă одеяло, тата ытти çавăн пек япаласемпе сыхланса юлма пулать, отравляющи вещество сарăлнă участок урлă резинăран тунă атăпа çеç мар, ахаль калушпа тата çăматă тĕпне такан сыхса каçма пулать.

Паллах, сывлăшран пырса тапăнасси уйрăм хулара тата районра мĕнле обстановкăра пулассине малтанах калаçа пама йывăр. Анчах кирек-мĕнле пулсан та, кирек-мĕнле йывăр обстановкăра тапăнсан та, çынсен яланах тӳсĕмлĕн тата пĕлсе ĕçлемелле. Çавăнпа та çĕнтĕ тренировка енĕпе ирттерекен занятисенче, самозащита групписен звенисен занятийĕсенче тăшман чăннипех пырса тапăннă чухнехи пек ĕçлемелле, çынсене практикăра палăлтарса пымалла, кӳ ĕçе условно, ячĕпĕн çеç тăвассине пĕтĕмпех сирсе пăрахмалла.

С. ВИНОГРАДОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕН редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен йĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин 0—23.

НТ 5557

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 406. Ф. б. 58. 84 п. л.